Чебокс... Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ФЕВРАЉ 21 ТУНТИКУН
42 (4855)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухаť ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

274 кун куçса çӳрекен пăр çинче

1937 çулти майăн 21-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 11 сехет те 05 минутра Совет Союзĕн Геройĕ М. Водопьянов пилотĕпрен хăраман поҫар тĕпчевçисене—Папанина, Кренкеле, Ширшова тата Федорова, пысăк сывлăш карапĕпе илсе кайса, Çурçĕр поҫусĕ районĕнчи куçса çӳрекен пăр çине антарса хăварнă. Тепĕр пилĕк кунтан вĕсем патне експедицири ытти виçĕ карап вĕçсе çитнĕ, вĕсем тĕпчевçĕсем валҫи кирлĕ йапаласем илсе пынă. Çурçĕр поҫусĕнчи пĕрремĕш поҫар станцине организацилени совет поҫар ҫотчикĕсем, учонăйсен геройла ĕçĕ пурне те тĕлĕнтерсе савăнтарчĕ.

„Ĕмĕрхи чĕмсĕрлĕх патшалăхĕнче,—сырнă поҫусра хĕл каçакансен начаҫникĕ Папанин,—ĕмĕр ирĕлмен пăрсен хушшинче епĕр канаçсăр ĕçлĕпĕр, мĕншĕн тесен епĕр аслă çĕршывăмăр пирĕн çинчен шухăшлашине, пирĕншĕн тăрашнине пĕлсе тăратпăр".

Халăхпа правительствă çапла пулăшнипе пĕр капиталисăмла çĕршыври поҫар тĕпчевçисем те курман.

Пăр çинчи пирвайхи кунсенче папанинçăсем пĕтĕм вăхăта хăйсен аплă хуçалăхĕпе ĕçлесе иртернĕ—сывлăш карапĕсене пушатма, ирĕклетме васкаса. Майăн 30-мĕшĕнче Ернст Кренкел Коминтерн йачĕпе тăракан радиостанци калаçнине пуçласа тытаť.

Ийунĕн 4-мĕшĕнче ирхине Мускав „Çурçĕр поҫусĕ" станцине радиотелефон тăрăх сыхăнса тăрас ĕçе йĕркелесе йараť. Куçса çӳрекен пăр çинчен унта хĕл каçма йулнăскерсем хăйсен тăванĕсемпе сывăх çыннисем патне радиограммăсем йараççĕ. Çав кунах Петр Ширшов поҫар бассейнĕн центрĕ витĕр чылай ăшă (унтине танлаштарсан) вăйлă шыв сиĕ йухса иртнине палăртаť. Вăл шыв сиĕ пурри çинчен халиччен нимĕн те паллă пулман. Çакăнпа пĕрлех поҫар тĕпчевçисем, поҫусра чĕрчун пурнăçĕ çук текен теори тĕрĕс мар иккенне палăртаççĕ. Вĕсем океанра поҫус районĕ патĕнчи шыв фаунинче пурăнакан чĕрчунсене кăларнă.

„Çурçĕр поҫусĕ" станцине уçнă йатпа, ийунĕн 6-мĕшĕнче, куçса çӳрекен пăр çинче митинг пулса иртет. Вăл кун 4 самоҫот пăр çинчен вĕçсе çĕкленеççĕ, Рудолф утравĕ çине таврăнма çул тытаççĕ. Пăр çинче йулнă 4 хăйулă тĕпчевçĕ, калама çук пысăк хастарлăхпа тăрăшса, палăртса хунă программăна пурнăçа кĕртме тытăнаççĕ.

Пăр çинче хĕлкаçакансен пурнăçĕ çăлкуç пек тапса тăнă. папанинçăсем кашни кунах пăр мĕнле йĕркере пулнине тĕрĕслесе пынă, гидрологилĕ станци тăвас тĕлĕшпе темиçе талăк хушши лебедкă патĕнчен каймасăр ĕçленĕ. Йевгений Федоров кашни кунах пăр мĕнле вырăнта пулнине палăртса пынă.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче правительствă заданине кăтартулăн лайăх пурнăçланăшăн, паттăрлăх палăртнăшăн Папанин йулташа Совет Союзĕн Геройĕ йатне панă, Кренкел, Ширшов тата Федоров йулташсене Ленин орденĕпе наградăланă.

Хăйсем Сталин тата Молотов йулташсен йачĕпе йанă çырувĕнче папанинçăсем çапла çырнă:

„Есĕр пире шаннине тӳрре кăларассишĕн, хамăр тăван çĕршыв чысне кирек мĕнле условире те тивĕçлĕн тытса тăрассишĕн епĕр пĕтĕм вăйхалăмăра хурăпăр".

Папанинçăсен сăмахĕсемпе ĕçĕсем уйăрăлса каймарĕç. Ийулĕн 5-мĕш тĕлнех вĕсем хăйсен лабораторинче океанăн тĕрлĕ тарăнăшĕнчен сăнавлăх (пробă тума) илнĕ шывсене сăнаса-тĕпчесе пăхнă, поҫус таврашĕнчи района Атлантикă океанĕнчен хăватлă шыв йухăмĕ йухса кĕнине вĕсем Пăрлă океанăн центрти пайне нумай ăшă илсе пынине палăртнă. Папанинçăсем çавăн пекех тата, Пăрлă океанăн центрти пайĕ чĕрчунсен пурнăçĕ тĕлĕшĕнчен ытла та чухăн текен гипотеза тĕрĕс мар иккенне ĕнентерӳлĕн кăтартса панă: пĕр пин метр тарăнăшĕнчен кăларнă планктонлă çеткă калама çук нумай тĕрлĕ моҫускăсемпе, личинкăсемпе, медузăсемпе, вĕтĕ раксемпе хĕвĕшсе тăнă, вĕсем йĕпкĕн хĕрлĕ тĕслĕ пулнă. Çутă кĕрсе çитеймен тарăн шывра пурăнакан чĕрчунсем пуринчен ытла çавăн тĕслĕ пулаççĕ. Папанинçăсем магнит меридианĕ Гринвич меридианĕнчен хĕвеланăç йенеле 41 градус пăрăнса тăнине палăртнă.

Хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр, чĕрĕрен йуратакан поҫар тĕпчевçисем,—çавăн пек пулма совет çыннисем çеç пултараççĕ.—Ийулĕн 16-мĕшĕнче „Çурçĕр поҫусĕ" станцинчен пăрсем пирвайхи хут пырса хĕсни çинчен радиограммă панă. Пăрсем çапла хĕсĕмме пуçлани ыран ийулĕн 14-мĕшĕ тепĕ чух çĕрле пулнă. Папанинçăсем аслăлăхлă сăнав-тĕпчевĕçне малалах туса пынă, çав тревогăлă факт çинчен вĕсем Мускава кĕскен те ăнланмалла: пăра пырса тĕкни спесĕмерĕ, хамăр пăрпа епĕр кăмăллă, тесе пĕлтернĕ.

Ийуҫ вĕçĕнче „Çурçĕр поҫусĕ станци районĕнче çанталăк сасартăк ăшăтса пăрахнă. Ийулĕн 20-мĕшĕнче термометр унта пĕр градус ăшă кăтартнă.

Лагершĕн хăрушă пулнă çав кунсенче те папанинçăсем, йалан пекех, материк çине метеосводкăсем парса тăнă, пăрсем ăçтала куçса пынине сăнаса вĕренсе пынă, магнитлă, гитробиологилĕ сăнав-тĕпчевсем туса пынă.

Куçса çӳрекен станци çулне çил пĕрмайах тĕрлĕ йенеле пăркаласа тăнă. 100 кун хушшинче пăр кукăр-макăр йĕрпеле куçса 550 километра йахăн çул тунă, тӳрĕ йĕрпе хисеплесен 400 километр кăна куçнă.

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче папанинçăсем куçса çӳрекен пăр çинче 200 кун хушшинче тунă ĕçсем çинчен материка отчот панă. Папанинçăсем талăкра 12—16-шар сехет ĕçленĕ. 200 кун хушшинче вĕсене Гренланди çыранĕсем патнеле йухтарса кайнă.

Куçса çӳрекен пăрсем çинче папанинçăсем хăйсене хăйсем тăрпĕччен пек туйман. Вĕсем хамăрăн телейлĕ çĕршывăмăрти пĕтĕм ĕççыннисен пурнăçĕпе пурăннă, хамăр çĕршывра, унăн чиккисен леш йенче пулса иртекен пĕтĕм ĕçсемпе интереслennĕ. Поҫара сăнакан тăватă тĕпчевçĕ Сталинла аслă тăрăшупа-йуратупа ăшăтса тăнă халăх вĕсем çинчен пĕр минутлăха та манман. ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă кунсенче папанинçăсене—халăхăн шанчăклă, боҫшевикла парти ĕçĕшĕн пĕтĕм пурнăçне хума хатĕр тăракан ывăлĕсене—совет государствин аслă органне суйларĕç. Папанина Карели АСС Республикĕнчи Петрозаводск хула суйлав округĕнчен суйланă, Кренкеле—Башкир АСС Республикĕнчи Уфа хула округĕнчен, Федорова — Киргиз СС Республикĕнчи Наукатск округĕнчен, Ширшова—Днепропетровск облаçĕнчи Киров округĕнчен депутата суйларĕç.

Гренланди çыранĕсем патнеле сывхарса пыни—папанинçăсен пурнăçĕнчи тревогăлă тапхăр пулнă. Февралĕн 1-мĕшĕнче ирхине пăр çĕмĕрĕлни вĕсемшĕн кĕтмен йапала пулман. Вĕсем тĕлĕнмеле çирĕплĕхпе ĕçлесе, аслăлăхлă сăнавсене йаланхи пекех ăнăçлăн туса пынă, палăртса хунă срӳксенче çанталăк çинчен, хăйсен станцийĕ хăш вырăнта тăни çинчен Мускава сведенисем парса тăнă. Тăватă хăйулă папанинçă йăвăр условисенче, çынна герой тăвакан пахалăхсене: боҫшевикла паттăр, тимĕр пек çирĕп дисциплинăлă, ывăнми вăйлă чĕрелĕ пулнине тепĕр хут пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕç.

Пăр катăкĕ çине йулса, папанинçăсем хăйулăхран, çирĕп дисциплинăлă пулнинчен килекен тĕлĕнмеле ĕçсем турĕç.

Капиталисăмлă Англи чаплă тĕпчевçе Роберт Скотт капитана кăнтăр поҫусĕ патне йарса, чи йăвăр минутсенче ăна маннă, кунçул ирĕкĕн аллине панă. Вăл тата унпа пĕрле пулнă çынсем хăйсен бази патĕнчи темиçе километрта вырăхса, шанса вилес умĕн асапланнă чухне ăна пулăшмашкăн никам та пыман. Поҫусра пулнă çак драмăн йулашки кунĕнче, хăй пурпĕрех пĕтессе сиссе, капитан Скотт хăй дневникĕ çине çакăн пек йĕркесем çырса хăварнă: „Пулăшсам пире турă вăйĕ! Етем килсе пулăшасса епĕр текех кĕтме пултараймастпăр". Ку йĕнтĕ шанчăкса сухатнă çынăн асаплă сасси пулнă.

Куçса çӳрекен „Çурçĕр поҫусĕ" станци панă тревогăлă хыпарсене пирĕн аслă çĕршыв йăлтах урăхла кĕтсе илчĕ. Поҫара тĕпчекен тăватă герой тăвакан ĕçе калама çук тимлĕн сăнаса тăнă аслă совет халăхĕ йăвăр минутра вĕсене манмарĕ. Правительствă решенийĕ тăрăх, папанинçăсен группине пăр çинчен илес ĕç валҫи хамăр çĕршыв аллинчи пĕтĕм хăватлă техникăлă средствăсене мобилизацилерĕ. Папанинçăсен лагерĕ патне хăватлă пĕрçĕмĕренсем; бортсем çине самоҫотсем лартса тухрĕç. Ун пек ĕçсене халиччен истори курман-ха.

Арктикă геройĕсене, аслăлăх геройĕсене, аслă социалисăмла çĕршыв геройĕсене чыс та мухтав!

Шмидт йулташăн радиограмми

Февралĕн 19-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 14 сехетре, „Ермак" пăрçĕмĕрен,—ун çинче çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управлени начаҫникĕ Шмидт йулташ та пур,—вырăнĕ çурçĕр широтин 65 градусĕпе 40 минути тата хĕвеланаç долготин 12 градусĕпе 14 минути. Шмидт йулташран çакăн пек радиограммă илнĕ:

„Таймырпа" „Мурман" тĕлĕнмеле çитĕнӳсем тунипе вĕçĕмсĕр савăнатпăр. Çаксене туса пĕтерсен вĕсем иккĕшĕ те кайала тухаççĕ, епĕр „Мурманец" патнеле, ăна пăрсем хушшинчен илçе тухма, çул тытатпăр. Шмидт"

(ТАСС)

Папанина, Ширшова, Кренкеле, Федорова

Ответлă заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Сире сывлăх сунса саламлатпăр.

Пирĕн пĕтĕм çĕршыв Сирĕн паттăрла ĕçпе мухтанаť. Есĕр Мускава таврăнасса кĕтетпĕр.

Тăванла салам!

И. Сталин, В. Молотов, К. Ворошилов, Л. Каганович, М. Калинин, А. Микойан, В. Чубарь, А. Андрейев, С. Косиор, А. Жданов, Н. Йежов, Г. Петровский, Р. Ейхе, Н. Хрущев.

Остаҫцева, Барсукова, Котцова „Таймыр" тата „Мурман" командисене

Папанинăн мухтавлă експедицине пулăшас задачăна чаплăн пурнăçа кĕртнĕшĕн епĕр тав тунине тата пĕтĕм Совет халăхĕ тав тунине йышăнăр.

Сирĕн хăйулă та хăвăра шеллемесĕр тунă ĕçпе мухтанатпăр.

Тăванла салам!

И. Сталин, В. Молотов, К. Ворошилов, Л. Каганович, М. Калинин, А. Микойан, В. Чубарь, А. Андрейев, С. Косиор, А. Жданов, Н. Йежов, Г. Петровский, Р. Ейхе, Н. Хрущев.

Сталин, Молотов, Ворошилов, Л. М. Каганович, Калинин, Микойан, Чубарь, Андрейев, Косиор, Жданов, Йежов йулташсене

„Ермак" пăрçĕмĕрен—Шмидта

Хамăра панă заданине пурнăçа кĕртни çинчен рапорт пама вĕçĕмсĕр хавас. Çурçĕр поҫусĕнчен пуçласа çурçĕр широтин 75 градусне çитиччен епĕр тĕпчесе сăнаса вĕренме палăртнисене пурне те турăмăр, пăр куçнине, гидрологине тата метеорологине сăнаса вĕренес тĕлĕшпе аслăлăх йенчен хаклă материал пухрăмăр, гравитаци тата магнит туртăмне виçсе сăнас тĕлĕшпе пит нумай ĕçсем турăмăр, биологилĕ сăнавсене пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Февраҫĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа, 74 градусра епĕр пурăнакан вырăнти пăр таткаланса кайсан, епĕр çав условисенче те тума май килнĕ сăнавсене пурне те туса пытăмăр. Хăрамасăр ĕçлерĕмĕр, хамăр кунçул çинчен пĕр минутлăха та хăраса шикленмерĕмĕр, пирĕн хăватлă тăван çĕршыв хăйĕн ывăлĕсене йарсан, вăл вĕсене нихăçан та пăрахса хăварас çук-кине епĕр пĕлсе тăнă. Парти, правительствă, хаклă Сталин йулташ тата пĕтĕм совет халăхĕ пирĕн çине ăнă кăмăлпа та тăрăшса пăхни пире пĕрмайах пулăшса пычĕ, пур ĕçе те ăнăçлăн туса иртерме май пачĕ. Çак сехетре епĕр пăра пăрахса хăваратпăр. Çак самантра пăрăн координачĕсем: çурçĕр широтин 70 градусĕпе 54 минутинче, хĕвеланĕç долготин 19 градусĕпе 48 минутинче. 274 талăк хушшинче 2.500 километр чухлĕ куçнă. Пирĕн радиостанци Çурçĕр поҫусне çĕнсе илнĕ хыпара чи пирвай пĕлтерчĕ, тăван çĕршывна çыхăну тытассине лайăх туса пычĕ. Çак телеграммăпа радиостанци хăйĕн ĕçне пĕтерет.

Пирĕн тăван çĕршывăн хĕрлĕ йалавĕ пăрлă талкăшĕсенче халĕ те вĕлкĕшсе тăраť.

Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров.

„Çурçĕр поҫусĕ", 15 сехет те 55 минут.

Паттăр папанинцăсем „Мурманпа" „Таймыр" борчĕсем çинче

„ТАЙМЫР" борчĕ, февралĕн 19-мĕшĕ. 18 сехет те 30 минут (Радио. ТАСС-ăн йатарласа кайнă корреспонденчĕ). Шăп 13 сехет 30 минутра пăрçĕмĕренсем лагер патне пырса унтан 1,5 километрта чарăнчĕç. Икĕ карап çинчи 80 çын лагер патне йалавсемпе пытăмăр. Папанинçăсем те пире йалавсемпе тата Сталин йулташ портречĕсемпе кĕтсе илчĕç.

„Смирно!" командă парса експедици руководителĕ Остаҫцев папанинçăсене рапорт пачĕ:

—Правительствă распорйаженийĕ тăрăх „Таймыр" тата „Мурман" карапсем Сирĕн распорйаженине килсе çитрĕç. Приказанисем кĕтетĕп.

Кĕске митинг пулнă хыççăн, Сталин йулташа тата паттăрсене-папанинçăсене чысласа „урра!" кăшкăрнă хыççăн епĕр сийĕнчех лагере пăсса, унти йапаласене майлаштарма тытăнтăмăр. Тепĕр çур сехетрен лагертен питех те хаклă грузсене—поҫарти „Çурçĕр поҫусĕн" пурлăхне асăрхаса йатса çынсем пĕрин хыççăн тепри „Таймыр" патнеле утрĕç. 17 сехет те 30 минутра лагерти пурлăха пĕтĕмпех „Таймыр" борчĕ çине çитерсе хутăмăр. Çавăнтах пăр çинче папанинçăсенчен хăшне хăш карап çине ларасси пирки шăпа тытрăмăр. Папанинпа Кренкеле „Мурман" çине ларма шăпа тухрĕ, Федоровпа Ширшова—„Таймыр" çине.

16 сехетре Кренкеҫ йулашки хут радио тăрăх Сталин йулташа тата хамăрăн правительствăна рапортларĕ.

19 сехет те 00 минутра карапсем иккĕшĕ те кайала, тăван çыраисем патнеле, „Ермак" пăрçĕмĕрене хирĕç килме çул тытрĕç.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ

ОСТАҪЦЕВ.

Арктикăна çĕнтерсе иленкенсене чыс та мухтав

Мускаври, Ленинградри тата çĕршывăн ытти хулисенчи предпрійатисенче „Çурçĕр поҫусĕ" поҫар станци ĕçне чаплăн пурнăçа кĕртни çинчен пĕлтернине вĕçĕ хĕррисĕр пысăккăн мухтанса тата хавасланса кĕтсе илнĕ.

„Хăйсем çине тăнипе тата тимĕр пек çирĕп ирĕк-кăмăллă пулнипе,—теççĕ хăйсен саламĕнче Мускаври Трехгорнăй мануфактурăри рабочисем, инженерсем тата техниксем хăйулă поҫар тĕпчевçисене,—папанинçăсем етемлĕхĕн малта пыракан ăсĕсем ĕмĕтленме çеç пултарнă открытисемпе пуйанлатрĕç... Арктикăна çĕнтерсе иленкенсене чыс та мухтав!".

Ленинградри Сталин йачĕпе тăракан заводри стахановецсем, инженерсемпе техниксем чаплă паттăрсене, мухтавлă папанинçăсене йулташла хĕрӳлĕ салам йараççĕ.

„Совет Союзĕ,—тенĕ саламра,—вăл чи малта тăракан çĕршыв, чи куҫтурăлă çĕршыв пулса тăнине, вăл мĕн пур ĕççыннисен телейĕшĕн пĕтĕм етемлĕх прогресĕн ĕçне, аслăлăха, техникăна, куҫтурăна малала йанине пĕтĕм тĕнче умĕнче татах та тепĕр хут демонстрацилерĕ".

Аслă Совет депутачĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, аслăлăх работникĕсем тата искусствăн тава тивĕçлĕ дейателĕсем папанинçăсем çирĕп тӳсĕмлĕ тата паттăр пулнине, „Таймыр", „Мурман" тата „Мурманец" командисемпе ҫотчикĕсен шиксĕрлĕхĕпе хăйулăхне саламлаççĕ.

(ТАСС).

Етемлĕх ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ

„Поҫус" сăмах—çынсене пайтах шухăшлаттарнă сăмах пулнă. Поҫус çинче мĕн пуррине, вăл мĕнле иккенне, унта чĕр-чун пурăннипе пурăнманнине, унта мĕнле процессем пулса пынине никам та пĕлмен. Нумай учонăйсем, сăнавçă-тĕпчевçĕсем, çулçӳрекенсем Çурçĕр поҫусĕн вăрттăнлăхне кĕрсе пăхасшăн пулнă. Етемлĕх поҫуса алла илес тĕлĕшпе кĕрешнин историнче калама çук тарăн драматиллĕ страницисем туллийех. Арктикă пăрĕсем нумай експедицисем инкеклĕн пĕтнине курнă. Анчах çапла пулин те çынăн пурне те пĕлме тăрăшакан ăсне чарса лартма пултарайман. Çĕнĕрен çĕне хăйула çынсем тупăнса пынă, вĕсем çĕр чăмăрĕн çак илĕртсе тăракан пайĕнчи патнеле туртăннă. Вĕсем карапсем çинче, шыв айĕпе çӳрекен кимĕсем çинче, дирижабҫсем, самоҫотсем çинче пынă.

Пирĕн çĕршыв поҫусăн нумай ĕмĕрти вăрттăнлăхне уçма пикеннĕ хăйулă çынсем нумай панă, анчах патша Российĕн пĕтĕм стройĕ вĕсен хăйула пикенĕвĕсене инкеклĕ çул çине тĕртсе тăнă. Вĕсене пăрахнă, маннă, вара вĕсем пăрсем хушшинче пĕтнĕ. Октабĕрти социалисăмлă аслă революци хыççăн Арктикăна çĕнĕ хуçа, ирĕклĕ совет халăхĕ пычĕ, хăйар çанталăкла крайа алла илме, унта пурăнма пуçларĕ.

Çурçĕр поҫусне штурмлани пирĕншĕн совет учонăйĕсемпе совет поҫарникĕсен ĕçĕсене планлă йĕркепе малала туса пыни пулнă.

Пăр куçса çӳренипе пирвайхи хут планлă аслăлăх ĕçĕшĕн средствă вырăнне усă курчĕç, вăл аслăлăх ĕçĕ поҫар бассейнĕн центрти пайĕнчи калама çук пысăк, пачах та сăнаса тĕрĕслемен районне çавăрса илнĕ. Пăр çинче пулни хăйула 4 паттăртан пысăк хăйулăхлă, вăйлă чĕрелĕ пулма, курăнса тăман йăвăрлăхсене хирĕç кĕрешмешкĕн хатĕр тăма ыйтнă. Çак ĕçе тумашкăн Папанина, Ширшова, Кренкеле тата Федорова суйласа илсе, çĕршыв вăл çынсем хăйсене шаннине чыслăн тӳрре кăларасса, вĕсем хамăрăн совет хĕрлĕ йалавне мухтавлăн йатса тухасса шанса тăнă.

Куçса çӳрекен пăр çинчи станци тунă сăнавсем халиччен пухнă аслăлăх материалĕсене пысăккăн тĕплĕн туллилетрĕç, вĕсем Çурçĕр тинĕс çулне алла илессипе çыхăнса тăракан пит пысăк та паха аслăлăх проблемисене татса пама май парĕç. Папанинçăсем çутçанталăк процесĕсен пит те тĕрлĕ йенлă картинине, çанталăкăн циклонле ĕçĕ мĕнле аталанса пынине уçса пачĕç. Ку йĕнтĕ ССР Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем хушшинчи трансарктикăлă сывлăш çулне пурнăçа кĕртес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраť. Магнит поҫусĕ вырăнтан вырана куçнин тĕрĕс картти (ăна папанинçăсем пухнă аслăлăхлă материалсем тăрăх туса хатĕрлеме пулаť) трансарктикă сывлăш çулĕ çинче самоҫота тытса пырас ĕçĕн техникине çăмăллатаť. Магнитлă тăвăлсене сăнаса вĕренни ССР Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем хушшинче радио-майак организацилес ыйту çине ответ пама май параť. Ку йĕнтĕ ĕçе татса паракан ыйту.

Пирĕн хăйулă 4 паттăр аслăлăха пуйанлатнă аслăлăх сăнавĕсен калама çук пысăк комплексне хисеплесе тухма та йăвăр. Кунта çакăн пирки нимĕн иккĕленмели те çук: вĕсен ĕçĕ—аслăлăхĕн тата етем пĕлӳлĕхĕн чи тĕрлĕрен отраçлĕсене хунă пит те хаклă ĕç пулса тăраť. Етемлĕх ĕмĕтне—поҫусăн тата центрти поҫар бассейнĕн вăрттăнлăхне уçассине—тăватă хăйулă совет учонăйĕ пурнăçа кĕртрĕç.

Совет Союзĕн Геройĕ, М. В. Водопьянов.

Власов ҫотчикăн чаплă вĕçевĕ

Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управленинче пире çакна пĕлтерчĕç.

„1938 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче „Мурман" тата „Таймыр" çинчен радиограммăсем илнĕ вăхăтра атмосферă условийĕсем начар пулнипе, Черевичный Папанин лагерĕ патне вĕçни çинчен панă телеграммă пăтрашнă пулнă.

Лагере шырама Карабанов пилотпа пĕрле вĕçсе тухнă Черевичный йур çунă тĕле лекнĕ, вара, папанинçăсене тупаймасăр кайала „Мурман" патне вĕçсе таврăннă чухне сывлăшра начар курăннине пула, унăн ирĕксĕрех карапран çурçĕр йенчи пăр çине анса лармала пулнă."

Нумай мар вăхăт шыраса çӳренĕ хыççăн, Власов ҫотчик Черевичный анса ларнă вырăна тупнă, Черевичный машинипе йунашар анса ларнă, Черевичныйпа Карабанова пĕрерĕн-пĕрерĕн хăй машини çине лартса „Мурман" борчĕ çине илсе çитернĕ. Черевичный машини йусавлă пулнă, анчах унăн шăнса ларнă моторне ĕçе йама май пулман.

Черевичныйпа Карабанова „Мурман" борчĕ çине ăнăçлăн илсе çитернĕ хыççăн, Власов каллĕх сывлăша вĕçсе çекленнĕ, Черевичныйăн пăр çине йулнă самоҫочĕ патне кăйма „Мурмана" çул кăтартса пынă.

Çав кун Власов хăйĕн пысăк ăсталăхне, пысăк хăйулăхне кăтартса панă. „Мурмана" Черевичный самоҫочĕ патне çул кăтартса пынă хыççăн, Власов тата 4 сехет хушши сывлăшра вĕçсе çӳренĕ. Вăл, пăрсене сăнаса вĕçсе, Папанин лагерĕ патнеле çывхарса пыракан „Таймыр" çулне кăтартса пынă.

(ТАСС).

Пирĕн вăхăтри чи чаплă аслăлăх експедицийĕ

Куçса çӳрекен „Çурçĕр поҫусĕ" станци тунă ĕçсен пахалăхĕпе пысăккĕшĕ пирĕн вăхăтри аслăлăх експедицисен чи пуйан сăнавĕсенчен пĕри пулса тăраť. Пирĕн хăйулă тĕпчевçĕсем Çурçĕрти пăрлă океанра пăр талкăшесем (шыв сахаллин тата çыран влийанинчен) ирĕклĕн куçса çӳренĕ саккун опычĕпе малтанхи хут тĕпчесе вĕреннĕ. Вăл хăйĕн анлăшĕпе „Мод" карап çинче Свердрук сăнаса вĕреннисенчен нумай малта тăраť.

Çавăн пекех сывлăш температури, çил, унăн вăйĕ тата поҫар бассейнин ку таранччен пĕлмен пайĕнчен çил вĕрни çинчен те сведенисене малтанхи хут илнĕ.

Вăл сведенисем куçса çӳрекен станци поҫус районĕнче пулнă вăхăтра уйрăмах хаклă пулнă. Çак пĕр станци пулнипех ĕнтĕ Çурçĕр поҫусĕ експедицинче пулнă синоптик Б. Л. Дзердзийевский теорилĕ геофизикă институтĕнче тунă доклад кăтартнă пек, Америкă станцисен синоптикăлă сведенисене Совет станцисен сведенисемпе çыхăнтарма, Совет Союзĕн Геройĕсен—Чкаловпа Громовăн самоҫочĕсен сывлăш çулĕ трассинчи çанталăкан шанчăклă прогнозне пĕлтерсе тăма май пачĕ.

Тинĕс шывĕн температурине сăнаса вĕреннĕ чухне „Çурçĕр поҫусĕ" станцинче хĕл каçакансем океанографилле пысăк открыти умне тухса тăнă: хирĕç пыракан ăшă йухăм тĕпĕнче температурă уснине тупса палăртнă. Ку открыти геофизикăшăн та, Çурçĕрти пăрлă океан биологийĕшĕн те пит пысăк вырăн йышăнса тăраť.

Тарăнлăха виçни тинĕс тĕпĕ мĕнли çинчен çĕнĕ сведенисем пачĕ, океан тĕпĕнчен илнĕ сăнавсем вĕсене лабораторилă сăнаса вĕренсен Çурçĕрти пăрлă океан тĕпĕн геологийĕ валҫи нумай çĕнĕ сведенисем хушса параť.

Тĕрлĕ тарăнлăхран илнĕ шывсем поҫар бассейнинчи океан шывĕн химилĕ составĕ çине çĕнĕ çутă ӳкереççĕ.

Аслăлăхсен академин географипе геофизикă ушкăнĕ хăйсен чаплă експедицине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ пирĕн паттăр тĕпчевçĕсен докладне пите хытă кĕтет.

ССР Союзĕн Аслăлăх академин теорилĕ геофизикă институчĕн директор заместителĕ

Профессор С. С. Ковнер.

Папанинцăсем

Иван Дмитрийевич Папанин чĕрĕ-легендă пулса тăчĕ. Вăл сыйăн—интереслĕ, çутă пурнăç. Вăл 1894 çулта Севастопоҫре, матрос семйинче çуралнă. Ача чухнехи пролетари ачисен пурнăçĕ, ăна açăрхаса ӳстересси питех пулман. Вăл тинĕсе йуратат, сехечĕ-сехечĕпе шывра çапкаланса çӳрет, пулă тытат, 14 çулхи ача чухне компассем тăвакан мастерскойра хăйĕн ĕçлĕ пурнăç çулне пуçлат, кайарахпа металлсемпе ĕçлекен токар квалификацине илет. 1915 çулта, империалисăмлă вăрçă пынă вăхăтра, çирĕп сывлăхлă йаш каччăна Хура тинĕс флочĕ мобилизаципе илет. Капиталисăмлă производствă пусмăрне пĕлсе илнĕ хыççăн, Папанин патша казармин пĕтĕм „ырлăхĕсемпе" паллашат. Граждăн вăрçи килсе çитсессĕн Папанин—фронтра. Рабочи пулнă çамрăк матрос, хăйĕн çĕнĕ йулташĕсем хушшинче авторитет, вĕсен хĕрӳлĕ йулатуне кĕрешсе илме елкĕрнĕ çамрăк матрос кам йенне тăрса çапăçни çинчен калама кирлĕ-ши вара?

Вăл тĕрлĕ фронтсенче Калединпа Деникин бандисене хирĕç пархатарлăн çапăçат, хĕрлĕ матроссен малти ретне, пуçне тăрса, Питĕр хулине корниловцăсенчен сыхлат, Врангел тылĕнче партизан отрăчĕсем организацилет. Командир тата комиссар боҫшевик Папанин—1919 çултанпа вăл ПСК(б)П членĕ—йаланах малта, йаланах хăйĕн примерĕ çинче хăйулăхпа паттăрлăх тĕслĕхне кăтартса пырат. Вăл чи чăрсăр, чи хăйулă плансене пурнăçа кĕртсе пырат. Тава тивĕçлĕ паттăрлă ĕçсем тунăшăн ăна правителствă Хĕрлĕ йалав орденĕпе тата ылтăн сехетпе наградалат.

Кайарахпа пролетари диктатурин органĕсенче—ВЧК-ра ĕçлет. Амданскри ылттăн кăларакан вырăнсенче Иван Дмитрийевич хăватлă радиостанци тăват, 1931 çулта, Çыхăну Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ пулса, „Малыгин" пăрçĕмĕрен Арктикăри турисла рейспа Франц-Иосиф çĕрĕ çине кайнă çĕрте пулат. Çав рейс унăн поҫарти ĕçĕсен пуçламĕшĕ пулнă. Кам хăйулă та ĕçре татаклăн тӳрĕ, çавна Арктикă парнат. Тепĕр çулне вара Папанин—Франц-Иосиф çĕрĕ çинчи поҫар станцин начаҫникĕ. Икĕ çул хушши—1934—35 çулсенче—Иван Дмитрийевич Чеҫускин сăмсахĕ çинче хĕл каçакансен руководителĕ пулса ĕçлет. Поҫарниксем вăл вăхăт тĕлне Папанина лайăх пĕлсе тăраççĕ. Вăл йертсе пынипе хĕл каçни вăл ĕç çĕр процентпĕех ăнăçлă пулнине пĕлтерет, вăл—ăслăлăхлă пысăк ĕçсем тунине пĕлтерет. Хĕл каçас ĕçе мĕнле майпа чăн-чан лайăх организацилемелине, ăна куҫтурăлă иртермелине ĕçре кăтартса паракан çак çынна—ĕçе тĕплĕн тума ыйтакан, пуриншĕн те ăшă кăмăлпа тăрăшакан çынна хĕл каçакансем пурте йуратаççĕ, хисеплеççĕ.

Хăй ăслăлăх работникĕ пулнăскер, Иван Дмитрийевич астрономине, штурман ĕçне, радиотехникăна вĕренет, Арктикăна кĕрешсе илес тĕлĕшпе мĕн тунисен историйепе тĕплĕн паллашат. 1936 çулта вăл—„Русанов" пăрçĕмĕрен çинчи експедици начаҫникĕ. Унăн задачи—Рудоҫф утравĕ çинче станци тата авиабазă тăвасси. Ку задачă, уйрăмăнах çав пăрлă йăвăр çул, çăмăл пулман. Анчах Папанин йăварлăхсем умĕнче нихăçан та кайала чакмаст. Вăл инçетре хăйар çанталăклă утрав çине апат-çимĕç, радиостанци, çунтармали йапаласем илсе пырат, унта çитет, хĕл каçма йулакан 20 çынна антарса хăварат. Тĕнчери чи инçетри çурçĕрти поҫар станцине чи кĕске срукçенче туса лартаççĕ.

Анчах боҫшевикăн хастарлăхĕшĕн ку та чикĕ мар. „Тĕнчери чи çурçĕрти станци" вăл çĕр чăмăрĕ çинчи чи çурçĕрти пăнчă мар-ха.

—Çурçĕр поҫусĕ çине! Куçса çӳрекен пăр çинчи експедицийе!—ĕмĕтленет Папанин. Вара çĕршыв,—унăн тума пултарайман ĕç çук,—унăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртет, ăна халиччен тĕнче курман зимовка начаҫникĕ туса йарат.

Папанивăн тава тивĕçлĕ ĕçĕсене пысăкăн хакласа, ăна правителствă Совет Сойузĕн Геройĕ йатне паче.

* * *

Папанинăн мухтавлă соратникĕ Петр Петрович Ширшов—совет учонăйĕсен çамрăк ăрувĕн представителĕ. Вăл 1905 çулта Днепропетровскра (ĕлĕк Йекатеринослав пулнă), рабочи-печатник семйинче çуралнă. Ача чухнех çулçӳревсем çинчен ĕмĕтленет. 1921 çулта халăха çутта кăларас ĕç институтăн биологи факуҫтетне вĕренме кĕрет. Унтан вĕренсе тухсан 1926 çулта Одессăри ботаникă садĕнче аспирант пулса ĕçлет. Ширшова Арктикă илĕртет, хăй патне туртат. Унăн ĕмĕчĕ 1930 çулта пурнăça кĕрет. Ун чухне вăл Ленинградри ботаникă садĕн гидробиологилĕ експедицин начаҫникĕ пулса Коҫск çурмаутравĕ çине кайат. Çавăнтанпа вара вăл паллă совет експедицийĕсенче пуринче те пекех пулат. 1931 çулта Петр Петрович Çĕнĕ Çĕр çине кайнă експедицире пулат. Тепĕр çулне вара вăл—„Çибирйаков" çинче историлĕ експедицин гидробиологĕ. Çав експедицире пулса ĕçленĕшĕн ăна правителствă Ĕçлĕх Хĕрлĕ йалавĕн орденĕпе наградăлана.

Тепĕр çул иртсен Ширшов „Чеҫускин" пароход çинче. Чеҫускинцăсем çутçанталăкан суккăр вăйĕсене хирĕç кĕрешнĕ, пуриншĕн те асра тăракан кунсенче вăл пысăк учонăй кăна мар, тата хăй пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен, çине тăракан, кирек мĕнле йăварлăхсене те çĕнтерекен совет поҫарникĕ,—çавăн пек кăтартса парат вăл унта хăйне. „Чеҫускин" епопейинче пулнăшăн ăна правителствă Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлана.

Чеҫускинцăсене хăтарнă хыççăн тепĕр çулхине ыванма пĕлмен Петр Ширшов „Красин" пăрçĕмĕрен çинчи комплекслă експедицире Чукоткă тинĕсне кайат.

1936 çулта Ширшова Çурçĕр поҫусĕ çине експедицине кайакансен шутне кĕртеççĕ. Унта кайма вăл çине тăрсах хатĕрленет. Пăр çинче врач кирлĕ пулма пултарат. Ширшов йатарласах медицинăлă хатĕрлевӳ витĕр тухат. Кĕçех кирлĕ пулма пултарат тесе тата астрономийе вĕренет.

Куçса çӳрекен пăр çинче Ширшов ăслăлăхлă пысăк ĕç туса пырат тата, ытти папанинцăсемпе пĕрле, пăрлă вахтăра паттăрăн тарат. Ширшова правителствă Ленин орденĕпе наградăлана.

* * *

Ернст Кренкел Арктикăра вунă поход тунă. Вĕсенчен 8 мĕш похочĕ „Чеҫускин" çинче пулнă. „Чеҫускин" çинчи поход хыççăн поҫар радисĕ Ернст Теодорович Кренкел хамăр çĕршывра, тата унăн чиккисен леш йенче те, чи паллă, йуратнă çынсенчен пĕри пулса тăчĕ.

1924 çулта 20 çулхи Кренкел Çĕнĕ Çĕр çине кайса, Арктикă условийĕсенче пирвайхи хут пиçĕхет. Унта вăл икĕ çул иртерет. 1927 çулта, Хĕрлĕ Çар службинче пулнă хыççăн, вăл каллех Çĕнĕ Çĕр çинче хĕл каçат, унта вăл кĕске хумлă пĕрремĕш передатчик йĕркелесе лартат. Вăл передатчик—Арктикăра тунă пĕрремĕш передатчик пулнă.

1929—30 çулсенче Кренкел Франц-Иосиф çĕре çинче хĕл каçат. 1930 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче Тихайа йатлă бухтаран, тĕнчери чи çурçĕрти радиостанциран адмирал Берд експедицийепе (Америкă експедицийе) çыхăнат. Берд експедицийе çĕр чăмăрĕн тепĕр йенчи панчинче—АНТ арктикăра хĕл каçнă пулнă.

1932 çулта Ернст Кренкел „Çибирйаков" çинче поход тăват, вăл походра пулнăшăн ăна правителствă Ĕçлĕх Хĕрлĕ йалавĕн орденĕпе наградăлана. Кайран, Чеҫускин епопейинче пулса, вăл Хĕрлĕ Йалав орденĕ илнĕ.

Паллах. Çурçĕр поҫусĕ çине кайакан експедици ваҫҫи çынсем суйланă чухне 4 кандидатран пĕри Кренкел пулнă.

Совет радисĕ Ернст Кренкел куçса çӳрекен пăр çинчен Мускава, пĕтĕм тенчене йулашки хыпарсем парат, уйăхра, икĕ уйăхра, çур çулта тунă ăслăлăх ĕçĕсем çинчен сводкăсем парат, метеорологилĕ сводкăсем парат, „пурте йĕркелех!" тесе пĕлтерсе тăрат. Вăл урăхла пулма та пултараймаст. Кренкел унта—апла пулсан Пысăк Çĕрпе сыхăну тытасси лайăх пулса пырат, пурте ăнăçлă!

Куçса çӳрекен пăр çинчен паттăрлăх палăртнăшăн Кренкеле Ленин орденĕпе наградăлана.

* * *

Папанинцăсенчен чи çамрăкки—Магнитолог Йевгений Константинович Федоров 1910 çулта, Бундеры хулинче (Бессарабир) çуралнă. Унăн ача чухнехи вахачĕ Горький хулинче иртнĕ. Унта вăл вăтам шкулган вĕренсе тухат. Çавăнта вĕреннĕ чухне вăл астрономине, физикăна, математикăна йуратат, вĕсемпе интересленет. 22 çулхи çамрăк каччă чухнех вăл Ленинградри Университетăн физикă-математикă факуҫтетĕнчен (çĕр магнетисăмĕн специаҫнăçĕ тăрăх) вĕренсе тухат. Ăна Арктикă хăй патне туртат, вара вăл унта Франц Иосиф çĕрĕ çине кайат. Çамрăк учонăй йăвăр походсемпе Рудоҫф утравĕ çине, Архипелагăн тата ытти утравĕсем çине кайат. Кунта вăл поҫар станцин начаҫникĕпе Иван Дмитрийевич Папанинпа паллашат. Папанин малала унăн пурнăçĕнче калама çук пысăк выран йышăнса тăрат. Папанин ăна комсомол ретне хутшăн тарат, партине кĕмешкĕн рекомендаци парат.

Папанина Чеҫускин сăмсахĕ çинчи хĕлкаçакансен начаҫникĕ туса лартсассăн, вăл Йевгений Константиновича зимовкăра пулма, унта ăслăлăх ĕçĕсен начаҫникĕ пулса ĕçлеме чĕнет. Вăл ченӳве Федоров кăмăлласах йышăнат, хĕлкаçнă вăхăтра интереслĕ сăнав-тĕпчевсем пĕрре çеç мар туса иртерет. Çурçĕр поҫусĕ çине експедиципе кайма хатерленсе Папанин каллех çамрăк ученăйа калама çук чаплă хĕлкаçура пулма чĕнет. Федоров савăнсах килĕшет. Ăна суйласа илнипе Папанин йанăш туман. Çамрак ученăй хăй хăйулă та тӳсĕмле çын иккенне, калама çук лайăх йулташ иккенне, таван çĕршыва чунтăн йуратакан иккенне кăтартса парат.

Хĕлкаçун иккĕмĕш уйăх пуçламĕшĕнче Федоров ытти пур папанинцăсемпе пĕрле пысăк та чаплă наградă—Ленин орденĕ илнĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Изогиз Б. Йефимов художникĕн: "А ну, кто еще хочет на СССР" йатлă плакатне кăларат.

Союзфото репродукцийĕ.

Çĕнĕрен тупнă тĕнче

Профессор В. Г. Богоров.

Çурçĕр поҫусне експедици йама хатĕрленĕ тапхăрта епĕр Петр Петрович Ширшовпа „Çурçĕр поҫусĕ" станцин пулас ĕçĕсен методики мĕнле майлă пуласси çинчен чылайччен тĕплĕн сӳтсе-йаврăмăр. Çурçĕрти пăрлă океан шывĕсенче ӳсен-тăрансемпе чĕр-чунсем тупасси пирки епĕр иккĕленмен. Анчах мĕнле ӳсен-тăрансемпе чĕр-чунсем тата мĕн чухлĕ пуррине ку таринччен никам та пĕлмен. Кунтан та ытларах, Нансен çапла çырнă: „Çурçĕрти пăрлă океанăн йаланах пăрпа витĕнсе тăракан центрти пайне океан варринчи чĕр-чун пурăнман пуш выран тесе шутламала..." тенĕ.

Епĕр Нансен йанăшат, тесе шутларăмăр. Поҫар бассейнин планктонĕ пуйан та тĕрлĕрен, пуриччен ытла уйрăм тапхăрсенче (сезонсенче) пуйан вăл.

Епĕр çавăн пек шухăшлани пĕтĕмĕшпех тӳрре тухрĕ. Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров хăйсен телеграмминче çапла çырчĕç:

„Ийулĕн йулашки вунăкунлăхĕнче тинĕсĕн çийелти сийĕнче ӳсен-тăран планктонĕ сисĕнмелех ĕрчеме тытăнчĕ. Гидробиологилĕ çуркуппе персе çитрĕ пулмала".

Çакăн хыççăн йанă телеграммăсенчен пĕринче епĕр çапла вулатпăр:

„Сентабĕр пуçламĕшĕнче фитопланктон (ӳсен-тăран планктон) чечеке ларса пĕтрĕ, вăл чечекленесси пĕтĕм август уйăхĕнче пулса пычĕ. Фитопланктон—Уçă тинĕс çинчи мĕнпур чĕр-чунсене тăранса пурăнмали пĕрремĕш çимĕç—ӳсни поҫар бассейнин центрти пайĕнче пурнăç çук тесе калакан гипотезă йанăш пулнине татăклăн ĕнентерет".

Папанинцăсем чаплă уçса палăртни çапла вара Пăрлă океан центрĕнче пурнăç çук тесе каланă ăнăçсăр йумаха аркатса тăкрĕ. Анчах унти пурнăç мĕнлеха? Поҫус районĕнче чĕрĕ пурнăç пурри мĕнле океансемпе çыхăннă? Çак иккĕмĕш задачăпа та „Çурçĕр поҫусĕ" станцин гидробиологĕ Ширшов калама çук чаплăн тăтса панă. Кунта Атлантикă океанĕн влийанийĕ калама çук пысăк иккен. Папанинцăсем Атлантикăран ăшă йухăмри шывсем хăватлăн пырса кĕнине палăртнă. Çав шывсем планктонсемпе хĕвĕпсе тăнă. Çав йухăмăн 300 метр хулăмĕшĕнче тĕрлĕ йышши раксем, хуртсем Гренланди тинĕсĕнчи чухлех пулнă.

Поҫус районĕнче вĕсен-кайăксем, тата упасем те пулни пурне те тĕлĕнтернĕ. Вĕсĕ-хĕрри курăнман пăрлă талкăшсенче вĕсем мĕнле çимĕç тупса тăранса пурăнма пултараççĕ-ха? Биологилĕ çуркунне вăхăтĕнче пăр ирĕлнĕ чухне пурнакан чĕр-чунсем çав тери нумайиипе пĕлсе тăрса. епĕр шанчăклăнах çапла ĕнентерсе калама пултаратпăр: поҫус районĕнчи вĕсенкайăксем çимĕç çитменнипе нихăçан та аптăрамаççĕ. Упасем пурри унта пулăсем нумайиине пĕлтерет, упасем çав пулăсемпе тăранса пурăнаççĕ.

Ширшовăн тĕлĕнмеле мĕн пур коллекцийĕсене тĕплĕн тĕпчесе тухнă хыççăн,—вăл коллекцисене папанинцăсем Гренланди тинĕсĕн пăрлă пăттинче паттăррăн сыхласа хăварнă,—пирĕн умра Пăрлă океанăн пĕтĕм пурнăçĕ хăйĕн тĕрлĕ йенĕсемпе тата пуйанлăхĕпе уçăлса курăнĕ.

Папанинцăсем çав тери пахан уçса палăртнисем çăмăл ĕç пулман. Експедицине çулталăка йахăнах хатĕрленнĕ вăхăтра калама çук пысăк ĕç тунă. Нисга та нихăçан та ĕçре усă курман приборсем шухăшласа кăларса конструкцилеме тиврĕ. Вĕт, пирĕн куп пек експедицисен опычĕ пулман. Пурте епĕр çĕнĕ приборсене лайăхлатассишĕн ĕçлесе, Ширшова хавасланса та йуратса пулăшма тăрăшрăмăр.

Експедицине чаплăн вĕçленĕ. Арктикăна çĕнсе илмели сталинла плана пурнăçа кĕртес тесе, тĕнче ăслăлăхĕ ваҫҫи Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров тунă калама çук чаплă та хăйулă ĕç малашнехи ăслăлăхлă тĕпчевĕсен çулне çутатса тăрат.

Ăслăлăх геройĕсем

Профессор П. Молчанов

„Çурçĕр поҫусĕ" станцире хĕл каçнă паттăрĕсем тунă калама çук интереслĕ сăнавсен татăклă итогĕсене тума хаҫ ир-ха Анчах вĕсен ĕçĕсен радио тăрăх пĕлтернĕ резуҫтачĕсем çине çийелтен çеç пăхса илни те, сăнавсем центрти поҫар бассейнĕнчи климăт чылай паха уйрăмлахĕсене палăртнине кăтартса параççĕ. Сăмахран, çакăн пек вывод тума пулат: Артикăнчи центрĕнче те, сăмахран, Йакутири пек вайлă сивĕсем пулмаççĕ. Куçса çӳрекен станцире палăртнăчи пысăк сивĕсем те 30—35 градусран ытла пулман, çав вăхăтрах Йакутире 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче 50 градус таран сивĕ пулнине сăнанă. Унтан анемометр (çиле сăнамали прибор) тăрăх сăнанисем çакна кăтартса параççĕ. Унта çил хăвăртлăхĕ чылай пысăк тата тӳлек çанталăксем сайра пулса пыраççĕ. Çакăн пирки пĕр иккĕленмели те çук. Станци тунă сăнавсене тĕплĕн тĕпчесе вĕренни вăл районри климăтан чылай, пит кирлĕ те паха уйрăмлăхĕсене палăртма май парĕ.

Папанинцăсем парса тăнă радиограммăсем — пĕтĕм çĕршывсенчи метеорологсем калама çук тимлĕн тытнă радиограммăсем епĕр çанталăк çинчен, климăт çинчен мĕнле пĕлнинчен „шурă пăнчăсене" тултармашкăн халех те нумай пулăшрĕç.

Папанинцăсен пурнăçне пĕтĕм халăх сăнат

ЕЛĔК. Писĕпри „Рой" колхоз членĕсем „Çурçĕр поҫусĕ" станцинчи папанинцăсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен радио тăрăх паракан хыпарсене кулленех итлесе пыраççĕ. Çавăн пекех тата вĕсен куçса çӳрекен пăр çинчен илсе килес тĕлĕшпе мĕн тунине хаçатсем çинче пĕр сиктермесĕр вуласа пыраççĕ.

Ваçкассинчи Илйич йачĕпе тăракан колхоз членĕсем те радио итлесе, хаçатсем вуласа пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем хамăр тăван çĕршывăн мухтавлă ывăлĕсен паттăр ĕçĕпе савăнаççĕ.

В. Йефремов.

Февраҫти буржуалă-демократилĕ революци

(Малали. Пуçламĕшĕ 36(4849), 37(4850), 38(4851)-мĕш номĕрсенче)

III.

Иквлаçлăх

Рабочисем тата шинел тăхăннă рабочисем революци туса хунă, анчах унăн çимĕçĕсем малтанхи вăхăтра вĕсене лекмен: советпа йунашар буржуази правителстви ӳсе ларнă.

Государствă думин Вăхăтлăх комитечĕ пĕтсе пыракан самодержави умĕнче те, восстани тăвакан халăх умĕнче те хăйне влаç тесе шутламан. Комитета „йĕрке кӳме" суйласа хунă пулнă, вăл ĕнтĕ тимлĕн çав ĕçе тунă. Родзйанко, халĕ комитет председателĕ, февралĕн 24-мĕшĕнчи суйлавсем хыççăн тӳррех министрсен совечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ кҫнас Голицын патне кайнă. Голицын, правителствă членĕсем пурте отставкă панă, хăй вăл кĕç-вĕç арĕслесе кĕтет, тесе ответ панă. Родзйанко каллех патшапа, Ставкăпа çыхăннă, фронт командуйушчисемпе каласса илнĕ, вĕсенчен Николай умĕнче Думă хутне кĕме ыйтнă. Анчах событисем хăвăрт малала пынă. Петроград çывăхĕнчи хуласенче восстани туни çинчен пĕлтерекен хыпарсем киле пуçланă. Ставкăран чуна лăплантаракан нимĕнле хыпар та пулман. Таврический дворецăн сулахай çунатĕнчен, рабочи депутачĕсен совечĕ пухăннă çĕртен, восстани тăвакан полксем пирĕн пата хăйсен представителĕсене йачĕç, тесе пĕлтернĕ. Гарнизон Думă комитетне пăхса тăмасăр советпа çыхăннă. Вăйсем буржуазине усăлă мар шайлашса тăнă. Буржуази, вăрçа вĕçне çитерес те революцийе сӳрсе йарас тесе, патшана „çĕнтерӳ правителстви" тутарттарасшăн пулнă. Кайран революцин пуçне касма революци çумне хутшăмасен. Ăна йертсе пыма хăтланса пăхасси çеç тăрса йулнă. Пролетариатпа ĕçсыннисем патша йĕркине хирĕç çапăçса хăйсен пуçĕсене хунă вăхăтра, буржуази хăйĕн „çĕнтерӳ правителствине" хыпаланса „революци правителствин" тĕсĕпе витнĕ, йулашкине путарса лартма шутласа хунă.

Сĕм-çĕрле Вăхăтлăх комитет пухăнса власа хăйсен аллине илме шут тытнă. Родзйанко приказ панă, тесе калаçнă. ла телеграммă панă: министрсене арĕсленĕ. правителствă çук.

„Хура халăх пурнăçа çавăрса иле пуçларĕ, Государствă думин комитечĕ, офицерсене тата администрацине вĕлерсе пĕтерме парас мар тата çулăмланса кайнă хастарлăха лăплантарас тесе, правителствă ĕçĕсене хăй çине илме йышăнчĕ"[1]).

Вăхăтлăх комитет Думă комиссарĕсене февралĕн 28-мĕшĕнче министрсем туса лартнă. Мускавран тата ытти хуласенчен революци çумне пĕрлешни çинчен пĕлтерекен хыпарсем киле пуçланă. Влаç организацилес тĕлĕшпе мĕн тумала тесе ыйтнă. Родзйанко мĕн пур хуласене Вăхăтлăх комитет туса хума хушакан телеграммă панă. Таврический дворец патне кунĕпех революци йенне куçнă çĕнĕ те çĕнĕ полксем пырса тăнă. Родзйанко, Миҫуков, салтаксене казармăсене таврăнса хăйсен офицерĕсене итлеме чĕнсе, сăмахсем каланă. Пĕрриче Родзйанко салтаксене лăпланма тата хĕçпăшала пама хушнă. Çавăн çинчен хыпар пит те хăвăрт гарнизон тăрăх саланнă. Восстани тăвакан салтаксенчен хĕçпăшал туртса илме Родзйанко приказ панă, тесе калаçнă, Нумай пулмаст Думăра пулнă полксем, депутатсем йарăр—салтаксене ăнлантарса парăр, тесе хистеме пуçланă. Хумхану сарăлса пыни çинчен Шуҫгин акă мĕн каласа парат:

„Астăвап, пĕр полка пĕр сылтăм националиса йанине... Вăл таврăнчĕ...

— Ну, мĕн унта?

— Нимĕнех те çук... Аван! Епĕ вĕсене сăмах каларăм—„урра" кăшкăраççĕ. Офицерсемсĕр нимĕн те пулмаст, таван çĕршыв хăрушлăхра тăрат, тесе каларăм. Мĕн пурри пур те аван пулĕ, тесе сăмах пачĕç, вĕсем государствă думине ĕненеççĕ...

— Ну, мухтав турра...

Анчах сасартăк телефон шăнкăтаттарчĕ...

— Мĕнле? Хаҫ çеç сирĕн патра пулчĕç вĕт... Пур те пит аван татăлнăччĕ çке... Мĕн? Каллех пăтранаççĕ? Кама? Кама та пулин сулахайтараххине? Йурат. Халех йарăпăр.

Миҫукова хушса йаратпăр. Миҫуков пĕр сехетрен таврĕнчĕ. Пит те кăмăллă.

— Вĕсем кăштах пăтранаççĕ. Вĕсемпе кирлĕ пек калаçман пек туйăнат мана... Епĕ казармăра темĕнле ешафотă çинчен калаçрăм. Пĕтĕм полк пулчĕ, тата ытти чаçсенчен те... Ну, кăмăл-шухăш пит те аван. Мана ал çинче йатса тухрĕç...

Кăшт тăхтасан телефон каллех шутсăр хытă шăнкăртаттарчĕ.

— Алло! Итлетĕп! Çав полк? Мĕнле, каллех? Миҫуков?.. Вĕсем ăна ал çинче йатса тухнă-вĕт... Мĕнле? Мĕн кирлĕ вĕсене? Татах та сулахайтараххине?.. Ну, йурĕ. Епĕр трудовика йарăпăр..."[1]

Çарăн класла составĕпе класла задачисем, патша вăхăтĕнче тата буржуази вăхăтĕнче çар служит тунă задачăсем, хушшинчи хирĕçӳ революцин малтанхи кунĕсенчех уçăлса палăрнă. Çарта тахçантанпах хĕрсе пынă процессем самодержавине персе антарнă хыççăн çийĕнчех çийеле шăтарса тухнă.

„Малтан епĕр икĕ салтак куртăмăр,—тесе каласа парат Англи генералĕ Нокс, революцийĕн малтанхи хумĕсене Петроградра артиллери управленийĕн чӳречинчен сăнаса тăнăскер,—унтан пĕтĕм урамĕпе тата тротуарсем тăрăх темĕн чухлĕ салтак йĕркесĕр ута пуçларĕ. Вĕсен хушшинче офицерсем пулман"[1].

Офицерсем хăйсем мĕнле класран тухнине тата политикă тĕлĕшĕнчен мĕнĕ кăмăлланине пăхса тăмасăр полксене пăрахса кайнă. Вак буржуази хушшинчен тухнисене тата кадровиксене рабочисемпе салтаксен хĕçпăшаллă блокĕ умĕнче сехре хăпни пĕрлештернĕ.

Хайхи генералах, вырăс çарĕ сойузникĕсен умĕнчи хăйĕн обйазателствине пурнăça кĕртсе пынине сăнаса тăма лартнăскер, полксенче пулнă хыççăн çапла пĕлтернĕ: Волынский полкăн баталйонĕнче 40 офицера пурне те хăваласа йанă, Йегерскинче 22 офицера хăваласа йанă, 1-мĕш чукунçул полкинче 64 офицертан 16 кăна хăварнă, вĕсем те пулин хĕçпăшалсăр. „Епĕ, Петроградра хĕççе упраса хăварнă пĕртен-пĕр офицер, пулас"[1], тесе салхулăн вĕçленĕ хăйĕн сăнавне Англи генералĕ.

Революцийĕн малтанхи сехечĕсенчен пуçласах буржуази çара хăйĕн аллинче тытса тăма хăтланнă. Февралĕн 27-мĕшĕнчех, влаçа илеччен, Вăхăтлăх комитет Çар комиççийĕ туса хунă. Çар комиççийĕн составне пĕр темиçе офицер тата темиçе генерал кĕртнĕ. Комиççийĕн задачи офицерсем салтак массисене йертсе пырассине упраса хăварассинче пулнă. Анчах айалти йухăм, ахăрса кайнă йуханшыв вурри пек, комиççи умĕн иртсе кайнă. Генерал Нокс салтаксем командованин йертсе пынинчен йепле хăварт вĕçерĕнни çинчен калакан уçă тĕслĕх илсех кăтартат.

„Государствă думин Вăхăтлăх комитетне Питĕр салтакĕсем уйăрса йанă депутаци çитсе тăрат. Вăл революцине çирĕплетесси çинчен мĕнле те пулин постановлени кăларма ыйтат. Комитет ун пек решенисене ваҫҫи вăхăт çитмен тенĕ ответа хирĕç салтак кĕле çинче çавăрăнчĕ те: „Апла тата лайăхрах. Епĕр хамăрах приказ çырăпăр", тесе каларĕ".

„Епĕр хамăрах"—çакă вăл революцийĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах салтак массисен организацилекен лозунгĕ пулса тăнă.

Рабочи депутачĕсен совечĕ—вăл революцийĕн малтанхи кунĕнчех салтак депутачĕсен совечĕ те пулнă — влаç пулса пынă. Çавна Вăхăтлăх комитет пуçлăхĕ Родзйанко хăйĕн çинче туйса курнă. Çапла мартăн 1-мĕшĕнче кăнтăрла ăна патша патне Пскова калаçма чĕнсе илнĕ. Чукунçул çинче ĕçлекенсем совет ирĕк памасăр пуйăс парасшăн пулман. Родзйанко советран ирĕк ыйтнă, унта кĕскен сӳтсе-йавнă хыççăн пуйăс памала мар тунă. Каçхине Родзйанкона патша йачĕпе тӳрех провод патне чĕннĕ, анчах Родзйанко пĕччен телеграфа каймастăп тесе каланă. Суханов каласа панă тăрăх, Родзйанко Совет представителне çапла каланă:

„Господа рабочисемпе салтак депутачĕсем" мана охранă паччăр йе манпа пĕрле пычăр, унсăрăн унта, телеграфра мана арĕслеççĕ... Мĕн ĕнтĕ! Сирĕнте вăй та влаç. Есĕр, паллах, мана арĕслеме пултаратăр... Тен, есĕр пире пурсăмăра та арĕслĕр, пĕлме çук"[1]).

Советăн чăнах та вăй пулнă, вăй хăй йеверлĕ правителствă пулнă. Февралĕн 28-мĕшĕнче ирпе ирех Петроград совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ çапла йышăннă: район комитечĕсене организацилес тата рабочи милици туса хурас. Ирпех „Известия Петроградского совета" хаçатăн совет йачĕпе воззвани пичетленĕ пĕрремĕш номĕрĕ тухнă. Воззванире çапла каланă:

„Государствă думинче лару иртерекен рабочи депутачĕсен Совечĕ халăх вăйĕсене организацилессине тата Росçийăра политикăлă ирĕклĕхпе халăх правленине татăклăнах çирĕплетессишĕн кĕрешессине хăйĕн тĕп задачи вырăнне хурат. Петроград районĕсенче халăх влаçĕ тухса хума Совет район комиссарĕсене уйăрса лартрĕ. Столицăри пĕтĕм халăха халăх совет тавра пĕтĕçме районсенче вырăнти комитетсем туса вырăнти мĕн пур ĕçсене йертсе пырассине хăйсен аллине илме чĕнетпĕр. Кивĕ правителствăна йăлтах сирсе пăрахассишĕн тата пурне те тивĕçлĕ, пĕр тан, тӳрех тата вăрттăн суйламалли суйлав правипе суйланă Учредителлĕ собранине пухассишĕн пур те пĕрле, пĕтĕм вăйа хурса кĕрешетпĕр"[1].

Çав кунах, февралĕн 28-мĕшĕнче, совет Петроградпа Мускав хушшинчи чукунçул тăрăх çӳремеле тума йышăннă. Мартăн 1-мĕшĕнче рабочисемпе салтак депутачĕсен совечĕн пĕрлешĕвле ларăвĕ пулнă. Родзйанко хĕçпăшал партарасси çинчен тухса каланă хыççăн Думăна шанманни ӳссе пыни çинчен полк представителĕсем хĕрӳлĕн тухса каланă. Ларăва çапла решени йышăннă: мĕн пур политикăлă кĕрешĕвре совета çеç пăхăнмала, Çар комиççийĕн распорйаженийĕсем совета хирĕç пымаççĕ пулсан çеç, вĕсене ĕçе кĕртмеле.

Тăвăллă лару хыççăн тӳрех пĕр ушкăн салтак çавăнтах, пӳлĕмре тӳнă йунашар

---

[1] Лукомский А. Из воспоминаний. „Архив русской революции". Том II. Берлин, 1921 г. стр. 20

[1] Шуҫгин В. Дни. „Русская мысль", Прага, 1922 г., кĕн. VIII—XII. стр 119—120

[1] Суханов Н. Записка о революции. Кĕн. 1, Петроград Гржебин. 1919 ç., стр. 212.

1) К населению Петрограда и России от совета рабочих депутатов. „Известия Петроградского совета рабочих депутатов" № 1, 1917 ç. февралĕн 28-мĕшĕ.

РСФСР Тӗпӗҫтӑвкомӗн IV-мӗш Ҫеҫҫинче Л. С. СПАСОВ йулташ каланӑ сӑмах

(Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ)

Йулташсем! Чӑваш республикинчи рабочисем, хресченсем тата совет интеллигенцийӗ РСФСР суйлав саккунӗн проектне пӗтӗм кӑмӑлпа ырланипе кӗтсе илӗҫ. Епӗ, чӑваш халӑхӗн депутачӗ, хамӑр республикӑра пурӑнакан мӑйӑн та вӑҫҫӑр халӑх йачӗпе чӑваш халӑхӗ Ҫеҫҫинче халӑхсе-йӑпа тӑратнӑ суйлав саккунӗн проектне ҫирӗплетессишӗн пӗр кӑмӑлпах тӑрат, тесе калама пултаратӑп.

Октябрӗти Социалисӑмлӑ революци тӗнчере чи пирвай патша Российӗнче пусмӑр айӗнче пурӑннӑ халӑхсене асаплӑхран хӑтарса ирӗклӗх тата пӗртанлӑх прависем пачӗ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе вырӑс рабочи класӗ социалисӑмла революци йалавне чи малтан ҫӗклерӗ. Вырӑс халӑхӗ, тӑван пичӗшӗ пек, ӗлӗк пусмӑр айӗнче пурӑннӑ халӑхсене—чӑвашсене, тутарсене, башкирсене, ҫармӑссене, узбексене, мордвасене, карелсене, калмыксене, ССР Союзӗнчи пӗтӗм халӑхсене чухӑнлӑхпа праваҫӑрлӑхран экономикӑ тата культурӑ чечекленӗвӗ, политикӑ йенчен пӗртан правалӑх, телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ патне ҫӗкленме пулӑшрӗ.

ССР Союзӗнчи халӑхсен аслӑ тӑванлӑхне граждан вӑрҫин суйӑмӗнче, социалисӑмшӑн пыракан кӗрешӳре туса ҫирӗплетнӗ, епӗр хамӑрӑн телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫине тапӑнма никама та ирӗк памастпӑр. Социалисӑм строительствине чӑрмантарма ӑмсанакан халӑх тӑшманӗсен пӗтӗм йулашкисене—путсӗр троцкиссене, бухаринҫӑсене, буржуалӑ националиссене тата ҫакан пек ирсӗрсене ним йулмиччен ҫапса аркатса пӗтеретпӗр. **(Тӑвӑллӑн алӑ ҫупасҫӗ).**

Вырӑс халӑхӗ хамӑр ҫӗршыври пӗтӗм халӑха хуҫалӑх тата культурӑ йенчен малалла йулнипе хӑвӑрт кӗрешме тӑвансла пулӑшу пачӗ. Вырӑс фабрикӗсем пире фабрик-заводсем тума пулӑшрӗҫ, пулӑшаҫҫӗ те. Вӗсем пирӗн хресченсене вӑйлӑ машинӑсем, станоксемпе тата механизмсемпе ӗҫлеме вӗрентрӗҫ, вӗрентеҫҫӗ те. Вырӑс фабрикӗсем пулӑшнипе епӗр рабочисен наципӗ кадрсене хатӗрлерӗмӗр. Пирӗн Чӑваш республикине Горькири, Сормоври, Выксари, Дзержинскри рабочисем пычӗҫ. Вӗсем пире коллективлӑн ӗҫлеме вӗрентрӗҫ, социалисӑмла ӑмӑртува организацилерӗҫ.

Акӑ мӗншӗн епӗр, чӑваш халӑхӗ, Совет Союзӗнчи халӑхсем пекех, пӗтӗм чӗререн, кӑмӑлтан Ленинградри, Мускаври, Горькири рабочисен аллисене тӑвансла чӑмӑртаса тав сире йулташсем, пулӑшу панӑшӑн тесе калатпӑр **(Алӑ ҫупасҫӗ).**

Йулташсем, пирӗн халӗ политикӑ, хуҫалӑх тата культурӑ строительствин пур участкисенче те хамӑрӑн ӗҫсене лайӑхлатассишӗн ҫирӗппӗн ӗҫлеме тытӑнмала. Халӗ ҫӗршыв умӗнче питех те пысӑк задачӑ тӑрат—ҫуракине лайӑх хатӗрленмелле. Тухӑҫлӑ тырпул туса илме вӑрлӑхсене, тракторсемпе машинсене, туртӑм вӑйне, ҫӗре ҫемҫетмелли йапаласене хатӗрлемелле. Калас пулат, ку ӗҫре пирӗн Чӑваш республикинче туса ҫитермен ӗҫсем чылай-ха.

Йалхуҫалӑх ӗҫӗсем ҫинчен каланӑ чухне епӗ РСФСР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн ӗҫӗсем ҫинчен каламасӑр иртсе кайма пултараймастӑп. Епӗ пӗлместӗп, ытти вырӑнсенче мӗнле, анчах епӗр Чӑваш республикинче, ҫавӑн пекех епӗ малтан ӗҫленӗ Горьки облаҫӗнче РСФСР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ пуррине туймастпӑр.

РСФСР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн ӗҫӗсене йусас йенӗпе правительствӑ мерӑсем йышӑнни кирлӗ.

Вырӑнсенче халӗ час-часах ҫӑмӑл промышленноҫӑ хӑйӗн программине мӗншӗн пурнӑҫа кӗртсе пыраймаст, тесе ыйтаҫҫӗ. Мӗнре-ха кунта сӑлтавсем? Чӗрӗ таварсем ытлашшипех пур. Ҫапла, ҫӗр маҫкӗнчен пир-авӑр тӗртекен промышленноҫа иртнӗ ҫулта чӗрӗ таварсем нумай пулнӑ, кӑҫал тата та нумайрах пухса илнӗ, пӗтӗн те, ҫӑм та нумайрах пухса илнӗ. Анчах резулӗтсем курӑнмаҫҫӗ. Суйлавҫӑсем шутлаҫҫӗ: Ҫӑмӑл промышленноҫӑн Халӑх Комиссариачӗ, унта ҫӗнӗ руководствӑ пулин те, ҫӑмӑл промышленноҫӑ фабрикисемпе ӗҫне туллин ӗҫлессине мӗншӗн кӗрешмен пултараймани ҫине Федораци Правительстви ытларах ҫавӑрӑнса пӑхса, интересленмелле. Ку питех те кирлӗ ыйту.

Совет халӑхӗ РСФСР Аслӑ Совет суйлавӗ патне ҫӗнтерӳсемпе пырат. Пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума, хамӑрӑн ҫӗршыва чечеклентерессишӗн кӗрешме Совет правительстви, хамӑрӑн тӑван большевикла партия, халӑхсен ҫулпуҫӗ, учителӗ Сталин йулташ тавра тата та таччӑн пӗтӗҫҫӗ. **(Алӑ ҫупасҫӗ).**

Г. К. ОРДЖОНИКИДЗЕ ВИЛНЕРЕН-ПЕ ПӖР ҪУЛТАЛӐК ҪИТНӖ ТЕЛЕ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Г. К. Орджоникидзе йулташ Батумири тӗрмен камӗринче (1908 ҫул).

(В. И. Ленин музейӗ. Мускав).

Сойузфото репродукцийӗ.

Колхозник-ударниксен Пӗтӗм Сойузри 1-мӗш сиесӗ пулни 5 ҫул тултарнӑ тӗле

ЛЕНИНГРАД, февралӗн 14-мӗш. Вӑл кун ӗмӗрне те манӑн асӑмран, кайас ҫук. Епӗ, чухӑн хресчен пулнӑ ҫын ывӑлӗ, колхозник-ударниксен историлӗ сиесӗн президиумӗнче аслӑ, ӑслӑ Сталинпа пӗр сӗтел хушшинче лартӑм.

Мана сӑмах пачӗҫ, вара епӗ сиеса хамӑр облаҫ тата район тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен, хамӑрӑн 1930 ҫулта 25 хуҫалӑхран организациленнӗ, сиес тӗлне 182 хуҫалӑха пӗрлештернӗ колхоз ҫинчен каласа патӑм.

Февралӗн 19-мӗшӗнче сиесра Сталин йулташ хӑйӗн историлӗ сӑмахне тухса kаларӗ. Вӑл: „...Колхоз ҫулӗ, социалисӑм ҫулӗ, ӗҫхресченӗсемшӗн пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулса тӑрат", терӗ. Ун чухне Сталин йулташ пур колхозниксене те пуйан пурӑнакан колхозниксем тӑвас задачӑ лартрӗ.

Акӑ хаҫ ӗнтӗ, пилӗк ҫул иртнӗ хыҫҫӑн, сиес пулнӑранпа пилӗк ҫул тулнӑ мухтавлӑ куна паллӑ туса, епӗр мухтанса калама пултаратпӑр: хамӑр ҫӗршывра социалисӑм турӑмӑр, колхозниксем хамӑрӑн калама ҫук чаплӑ тӑван ҫӗршывӑмарти пӗтӗм ӗҫҫыннисемпе пӗрле хаваслӑ та пуйан пурӑнаҫҫӗ.

Пирӗн „Илйич ҫулӗ" колхозӑн (Остров районӗ) хаҫ 160 лаша, мӑйракалӑ шултра выҫӑх 390 пуҫ, 70 сысна тата 70 сурӑх. Пӗр выҫӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ кӑна колоза иртнӗ ҫул 66 пин тенкӗ тупӑш пачӗ.

Рйадовой колхозникӑн Степан Разгуҫайевӑн ҫемйи 220 пӑт тырӑ 1.500 тенкӗ укҫа, нумай ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ илет.

Хаҫ ӗнтӗ колхозра клуб, туллимар вӑтам шкул, магазин пур. Туйантӑмӑр епӗр грузовик те.

Епӗ, хута сахал пӗлекен йал каччи пулнӑскер, зоотехник пулса тӑтӑм, ҫак кунсенче мана Остров райҫӗрӗҫ пайӗн выҫӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ секторӗн пуҫлӑхӗ туса хучӗҫ.

Пайан, колхозник-ударниксен пӗррремӗш сиесӗ пулни пилӗк ҫул тултарнӑ кун, манӑн ҫапла калас килет:—хамӑрӑн телейлӗ, культурӑлӑ, пуйан пурнӑҫ патне илсе ситернӗ ҫынна спасибӑ,—спасибӑ йуратнӑ Сталина!

В. П. Петров.

Йалхуҫалӑх ертелӗн Сталинла уставӗ тӑрӑх ӗҫленипе

Сталин йулташ колхозсене большевикла, колхозниксене пуйан та культурлӑ пурӑнакан тумала тенӗ лозунг пурнӑҫа кӗрсе пырат. Колхозсем ҫулран ҫул ҫирӗпленсе тӗрекленсе пыраҫҫӗ, колхозниксем те пуйан та культурлӑ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине куҫса пыраҫҫӗ.

Матуш йалӗ (Шӑхасан р-нӗ) патша влаҫӗ чухне, ытти пур чӑваш йалӗсем пекех, тӗттӗм йал пулнӑ. Унта вӗренни ҫынсем, культурлӑ учрежденисем пулман.

Совет влаҫӗ, коммунуссен партийӗ пӗтӗм хресчен халӑхне аслӑ та телейлӗ колхоз ҫулӗ ҫине кӑларчӗ.

Матуш йалӗ 1931 ҫултанпа колхозлӑ йал пулса тӑрса ӳссе ҫирӗпленсе пырат. Колхозра фермӑ пур, ҫӗнӗрен тунӑ витесем, вулав ҫурчӗ, пуҫламӗш шкул т. ыт.

Колхозри хресченсем те пӗрлешӳлӗ ӗҫре ӗҫлесе хӑйсен пурнӑҫне йусаса пыраҫҫӗ.

Акӑ Федоров Иван колхознике илсе пӑхӑпӑр. Вӑл мунча пек пӗчӗк пӳртре пурӑнса ӳснӗ. Чухӑн пурӑннӑ. Колхоза кӗнӗрешпе ҫӗнӗ пӳрт лартрӗ. Кантӑксем ҫинче занавескӑсем. Кроват, таса вырӑн. Килкарти тулли выҫӑх-чӗрлӗх.

Йегоров Николай колхозник та колхоза кӗнӗренпе ҫеҫ хӑйӗн пурнӑҫне йусарӗ. Вӑл коҫухра 5 ҫул ӗҫлесе кӑҫалхи ҫул пӗччен 200 пӑт тырӑ илчӗ. Ҫӗнӗ пӳрт лартрӗ. Выҫӑх-чӗрлӗх усракан пулчӗ.

Кун пек йулашки виҫӗ ҫул хушшинче ҫӗнӗ пӳрт лартнисем 20 колхозник шутланат. Ӗлӗк выҫӑх-чӗрлӗхсӗр пурӑннӑ колхозниксем колхоза кӗнӗренпе ҫеҫ ӗнелӗ пулчӗҫ.

Колхоз иртнӗ ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илчӗ. Колхозниксене ӗҫкунӗ пуҫне ҫуршар пӑт тырӑ тиврӗ. Лайӑх тӑрӑшса ӗҫлекен колхозниксем (Йемелйанов, Йегоров т. ыт.) 300—500 пӑт тӗштырӑ илчӗҫ.

Колхозниксем вӑхӑта культурлӑ иртере пуҫларӗҫ. Пушӑ вӑхӑтра йалан вулав ҫуртне пухӑнаҫҫӗ, хаҫат-журналсем вулаҫҫӗ.

Килӗрен хаҫат-журналсем ҫырӑнса илеҫҫӗ. Кӑҫал колхоз 300 ҫын вырнаҫмалӑх клуб лартма хатӗрленет. Хаҫ йывӑҫ турттараҫҫӗ.

Колхозниксен культури ӳссе пыни ҫакӑнтан та лайӑх курӑнат. 1936 ҫулта Матуш йалӗнче 2 учител пулнӑ пулсан, пайанхи куна 19 учител, 6 бухгалтер, 15 счетоводсем тата тӗрлӗ вырӑнсенчи служащисем 47 ҫын. 1913 ҫулта йалта пӗр велосипед та пулман, халӗ 12 велосипед, патефонсем—3, хуткупӑс—14, балалайкӑ—17, сехет—182, куҫкӗски-102, мунча-125 т. ыт. Тумтирсем йенчен илсен те 1913 ҫулта йалта пӗр-ик ҫын ҫеҫ калуш тӑхӑннӑ пулсан, халӗ—212 ҫын тӑхӑнат. Ӗлӗк сицӑ кӗпесем тӑхӑнса курман пулсан, халӗ ситцӑ кӗпе тӑхӑнман ҫын ҫук.

Халӗ колхозниксем Пӗтӗм Сойузри колхозник-ударниксен иккӗмӗш сиесӗ йалхуҫалӑх ертелӗн уставне йышӑнса ҫирӗплетни 3 ҫул тултарнӑ уйава ҫуракине лайӑх хатӗрленсе ҫитнипе кӗтсе илеҫҫӗ.

С. Соколов.

Епӗр Положенине ырлатпӑр

Епӗр „Чӑваш Коммунӗ" хаҫатра „РСФСР Аслӑ Советне суйламалли Положенине" вуларӑмӑр.

Положенине вуласан савӑнас килет. РСФСР Аслӑ Советне суйласси Сталинла Конституци никӗсӗ ҫинче пулса иртет. Ӗлӗкхи вӑхӑтра пирӗн чӑваш хӗрарӑмӗ хулана тухса ҫурайман, государства ӗҫне хутшӑнасси тӗлӗкре те пулман. Халӗ пирӗн хӗрарӑмсем государствӑна йертсе пырас ӗҫре нумай ӗҫлеҫҫӗ.

Епӗр хамӑра ӗҫлев, вӗренӳ, кану прависем панӑшӑн савӑнатпӑр. Кӑҫал акӑ чӑвашсен Шупашкарти педагогика рабфакӗнчен тухса совет учителӗсем пулатпӑр.

Пирӗн халӗ Положенине вӗренессине организацилесси, ӗҫҫыннисене ӑнлантарса парасси пулат. Епӗр „РСФСР Аслӑ Советне суйламалли Положенине" ырлатпӑр.

Ан. Василйева.
Нат. Афанасйева.

Тӗп саккуна пӑсакан почтальйон

Малтикас Шӗкӗрти (Шӑхасан р.) И. Федоров почтальйон массӑ хушшинче хаҫат-журнал сарассипе лайӑх ӗҫленӗшӗн сахал мар преми илнӗ. Халӗ ун вырӑнче Заметалов ӗҫлет. Вӑл уйӑхранах хӑй вырӑнне ӗҫлеме ачисене хушрӗ. Ачисем ҫырусене уҫса вулаҫҫӗ, хаҫат-журналсене ҫухатаҫҫӗ, хашпӗр номӗрсене подписчиксене пачах та памаҫҫӗ. Йанвар уйӑхӗнче „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата 6 номӗр ҫухатнӑ. Почтальйонра ӗҫлеме пултарайманнине шута илсе, колхозниксен пухӑвӗнче Заметалова ӗҫрен хӑтарас, тесе йышӑннӑччӗ. Ун пирки районри ҫыхӑну уйрӑмне пӗлтерсен: „тӗрӗслепӗр ҫырусене ачисем ҫеҫ уҫса вулани нимӗнех те мар", терӗҫ почтӑри работниксем.

ӖҪРЕ ӲСНӖ ҪЫНСЕМ

Партипе тӑман большевиксене районри ответлӑ ӗҫсене лартас тӗлӗшпе Вӑрмар районӗнче чылай ҫитӗнӳсем тунӑ. Кӑҫалхи йанвар уйӑхӗнчен тытӑнса, пайанхи куна ҫитиччен, 9 ҫынна районри ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеме илнӗ.

Ку ӗнтӗ питӗ пысӑк ҫитӗнӳ. Районри ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеме хаҫ килнӗ йулташсем пурте йалти общественӑлӑ ӗҫрен пуҫласа, районри ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеме пултаракан пуличчен ӳснӗ. Вӗсем пурте общественӑлӑ ӗҫре ӗҫлесе пырса, хӑйсем чӑнахах та шанчӑклӑ тата пултарулӑхлӑ ҫынсем иккенне кӑтартнӑ. Ӗҫре политикӑпа та, практикӑ тӗлӗшпе те вӗренсе пынӑ. Кашни кун халӑхпа пӗрле тачӑ ҫыхӑнса тӑрса, халӑха вӗрентнӗ, ҫавӑнпа пӗрлех хӑйсем те халӑхран вӗреннӗ. Кӗскен каласан, вӗсем пурнӑҫа лайӑх пӗлеҫҫӗ. Социалисӑм строительстви ҫинчен кӗнеке тӑрӑх кӑна мар, шкулра, йе институтсенче ларса профессорсем вуланӑ лекцисем тӑрӑх та мар, хӑйсем практикӑла ӗҫре пулса вӗреннӗ.

Акӑ Н. Вазанов йулташ. Вӑл 1908 ҫулта ҫуралнӑ. 1926—1930 ҫулсенче кӗнеке сутакан магазинсенче рабочи пулса ӗҫленӗ; 1930—1932 ҫулсенче Хӗрлӗ Ҫарта; 1932—1933 ҫулсенче Вӑрмар районӗнчи МТС-ра тракторист пулса ӗҫленӗ. 1933 ҫулта Анаткас йалсовечӗн председателне суйланӑ ӑна. Унта 1937 ҫулччен ӗҫленӗ. Ку йалсовет Вазанов йулташ ӗҫличчен кашни ҫулах, пур тӗлӗшпе те кайри ретре пынӑ. Вӑл председател пулса ӗҫлеме тытӑнсан, йалсовет прорывран тухса, районра малти ретре пыракан пулса тӑрат. Йалапах хӳрере ҫапкаланса пыракан йалсовечӗ ҫапла лайӑх ӗҫлесе пынине курсан, хӑшпӗр ҫынсем йӑлтах тӗлӗнсе кайнӑ:—Мӗнле-ха кун пек пулмашкӑн пултарчӗ? Пӑх-ха есӗ, кайра пыракан йалсовечӗ мала тухрӗ. Вӑт мӗнле ӗҫлет Вазанов,—тенӗ. Ҫапла лайӑх ӗҫлесе пынине кура хаҫ ӑна Вӑрмар райӗҫтӑвкомӗн секретарӗ пулса ӗҫлеме илнӗ.

Ҫавӑн пекех Семенов Иван Семенович та Шуркӗсре йалсоветӗнче нумай ҫул хушши председател пулса ӗҫленӗ. Хӑй шанчӑклине, пултарулӑхлине кӑтартнӑ. Хаҫ ӑна райӗҫтӑвкомра сывлӑха сыхлав пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлеме илнӗ.

Максимов Григори Вӑрмар райҫӗрӗҫ пайӗнче секретарте, районри Социаллӑ обеспечени пайӗнче инструкторта ӗҫленӗ. Хаҫ вӑл районри Социаллӑ обеспечени пайӗн пуҫлӑхӗ.

Степанов Николай, ҫамрӑк учител—районри сутӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлет.

Новиков йулташ колхозра бригадир пулса ӗҫленӗ, хаҫ райӗҫтӑвкомра инструктор.

Районри ответлӑ ӗҫсене илнӗ пур йулташсем ҫинчен ҫырмасӑр кӗскен ҫапла кӑна каламала:—вӗсем пурте йалта общественӑлӑ ӗҫре ҫитӗннӗ ҫынсем. Вӗсем практикӑла ӗҫре вӗренсе ӳснӗ. Хаҫ ӗнтӗ вӗсене, ӗҫленӗ вӑхӑтрах пӗр ывӑнмасӑр политикӑ тӗлӗшпе вӗрентсе ҫитӗнтерсе пымала, куллентхи ӗҫре пулӑшмала.

Анчах Вӑрмар районӗнче ҫак йулташсене вӗрентсе пырассине организацилемен-ха.

Н. Косойкин.

Колхозсемпе колхозниксемшӗн тӑрӑшни

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, 1937 ҫулхи ҫентабӗрӗн 22-мӗшӗнче йышӑннӑ решенийӗпе Канаш—Шупашкар чукунҫул строительствин Управленине колхозсем хӑйсем акса хӑварнӑ ҫӗр лаптӑкӗсем Канаш—Шупашкар чукунҫул строительствине куҫнипе пулнӑ 144284 тенкӗ те 4 пус расхода тӳлеме хушрӗ.

Канаш—Шупашкар чукунҫул строительствин Управленийӗ Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн решенине пурнӑҫа кӳртнӗ, тивӗҫлӗ колхозсене мӗн чухлӗ тӳлемелине пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ.

Колхозсене коммуналӑ банк урлӑ 1937 ҫулхи декабӗрӗн 15-мӗшӗнче 77767 тенкӗ те 18 пус, 1938 ҫулхи йанварӗн 10-мӗшӗнче 16516 тенкӗ те 86 пус куҫарнӑ.

Хӑшпӗр колхозсем, сӑмахран „Социалисӑм" колхоз 40 пин тенкӗ ытла, М. Горький йачӗпе тӑракан колхоз—15 пин тенкӗ илеҫҫӗ тата ыттисем те.

Колхозсемпе колхозниксен интересӗсемшӗн тӑрӑшнине кура, вӗсем партипе совет правительствине тав туса, 1938 ҫулта татах та лайӑхрах ӗҫлеме сӑмах пачӗҫ.

Пронин.

пӳлӗмре, советӑн ӗҫтӑвакан комитет членӗ меньшевик Н. Д. Соколов ларнӑ сӗтел патне кӗпӗрленсе пынӑ. Соколовне ҫарсен йенпе панӑ приказра советӑн решенийӗ ҫинчен халӑха пӗлтерме хушнӑ пулнӑ. Соколов хӑйӗн тавра тӑракан салтаксем мӗн хушнине ҫырнӑ.

Революцилӗ пӗррремӗш приказ шӑпах халӑх массисем хӗснипе тухнӑ. Ҫав приказ пирки Керенский кайарахпа „ал пуснӑ приказ пуҫпех ан пултӑр тесе, вунӑ ҫул пурнӑҫа панӑ пулӑттӑм"[1] тесе каланӑ.

Ана пӗтӗмӗшпех илсе пичетлетпӗр:

ПРИКАЗ № 1.

1917 ҫулти мартӑн 1-мӗшӗ.

Петроград округӗн гарнизонӗ тӑрӑх. Гварди, ҫар, артиллери тата флот салтакӗсене пурне те халех тата тӗп-тӗрӗс пурнӑҫа кӗртме, Петроград рабочисене хисепре тытма.

Рабочисемпе салтак депутачӗсен совечӗ ҫапла йышӑнчӗ:

1. Мӗн пур ротӑсенче, батальйонсенче, полксенче, парксенче, батарейӑсенче, ескадронсенче, тӗрлӗ йышши ҫар управленийӗсен уйрӑм службисенче тата ҫар флотӗн карапӗсем ҫинче асӑннӑ ҫар чаҫӗсенчи кӗҫӗн чинӗсенчен суйланӑ представителсенчен халех комитет суйламала.

2. Халиччен рабочи депутачӗсен советне хӑйсен представителӗсене суйламан ҫар чаҫӗсенче пуринче те ротӑран пӗрер представител суйламала. Ҫав представителсен ӗҫентерекен хутсемпе мартӑн 2-мӗшӗнче ирпе 10 сехет тӗлне Государствӑ думин ҫуртне пымала.

3. Ҫар чаҫӗ хӑйӗн пӗтӗм политикӑлӑ кӗрешӗвӗнче рабочисемпе салтак депутачӗсен составне тата хӑйсен комитетне пӑхӑнат.

4. Государствӑ думин Ҫар комиссийӗ панӑ приказсене, вӗсем рабочисемпе салтак депутачӗсен приказӗсемпе постановленийӗсене хирӗҫлемесҫӗ пулсан ҫеҫ, ӗҫе кӗртмеле.

5. Тӗрлӗ йышши хӗҫпӑшал сӑмахран: винтовкӑсем, пулемйотсем, броньӑ витнӗ автомобилсем т. ыт. ҫавнашкаллисем ротӑ комитечӗсемпе батальйон комитечӗсен аллинче пулмала, комитетсем вӗсене контроль туса тӑмала. Офицерсем ыйтсан та, вӗсене ним тусан та хӗҫпӑшал памала мар.

6. Стройра тата службӑ ӗҫӗсене тунӑ чухне салтаксен чи ҫирӗп ҫар дисциплинине тытмала, анчах салтаксем службӑра тата стройра мар чухне, хӑйсен политикӑлӑ, чӗтӗм гражданла тата харпӑрхӑйсен пурнӑҫӗнче мӗн пур граждансем усӑ куракан правасемпе усӑ курмала.

Уйрӑмӑн илсен, службӑра мар чухне йаш тӑрса обйазателлӑ чис тӑвасси пӑрахӑҫа тухмала.

7. Ҫавӑн пекех офицерсенче титулпа чӗнесси: ваше превосходителствӑ, благороди т. ыт. ҫавнашкалли пӑрахӑҫа тухмала. Ун вырӑнне господин генерал, господин полковник, т. ыт. тесе чӗнмеле.

Тӗрлӗ ҫар чинӗсене салтаксене сиввӗн чӗнме тата, уйрӑмӑн илсен, вӗсене „есӗ" тесе чӗнме чарас. Ҫакна кирек те мӗнле пӑсни ҫинчен те, ҫавӑн пекех офицерсемпе салтаксен хушшинче пулакан мӗн пур хирӗҫӳсем ҫинчен салтаксен ротӑ комитечӗсене пӗлтермеле.

Ҫак приказа мӗн пур ротӑсенче, батальйонсенче, полксенче, екипажсенче, батарейӗсенче т. ыт. стройевой тата стройевой мар командӑсенче вуласа кӑтартмала.

Рабочисемпе салтак депутачӗсен Петроград Совечӗ.

Приказ совета массӑсен пӗтӗмпе ҫавӑрса илекен революцилӗ организаци туса хунӑ. Мӗн пур ҫар чаҫӗсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗпе тата снарйаженийӗпе совет аллине куҫнӑ.

Приказра командирсене суйласси ҫинчен калакан пункт та пулнӑ, анчах приказа хаҫатра пичетленӗ чух ӑна Соколов хушнипе илсе пӑрахнӑ.

Мартӑн пӗррремӗшӗнче Мускавра, Саратӑвра рабочи депутачӗсен совечӗсем организациленнӗ. Сормоваран Чулхулана 5 пин рабочи пырса гарнизонпа туслашнӑ. Тверте пӗр темиҫе пин рабочи казармӑсем патне пырса салтаксемпе хула урамӗсем тӑрӑх тухса утнӑ.

Ҫавӑн пек условисенче Вӑхӑтлӑх комитет влаҫӗ пит те тӗрексӗр пулнӑ. Советпа каласса татӑлмала пулнӑ. Мартӑн 1-мӗшӗнче ҫӗрле 12 сехетре Вӑхӑтлӑх комитет хӑй патне ларӑва совет представителӗсене чӗннӗ. Пырасса меньшевиксем пынӑ: Н. С. Чхеидзе, Н. Д. Соколов, Н. Н. Суханов, Йу. М. Стеклов (ун чухне меньшевик) тата В. Н. Филипповский—ес-ер.

Советӑн ӗҫтӑвакан комитечӗ ҫавсене чӗнес умӗн нумайах та пулмаст ҫавӑн пекех влаҫ ыйтӑвне сӳтсе-йавнӑ. Ӗҫтӑвакан комитетра пуринчен ытла меньшевиксемпе ес-ерсем пулнӑ. Вӗсемшӗн Февраль революцийӗ ҫурмакрепӑслӑ режима пӗтерсе пыракан кӑна, вӗсен шучӗпе буржуази революцийӗн пӗртен-пӗр йертсе пыракан вӑйӗ пулнӑран та, Февраль революцийӗ буржуалӑ революци пулнӑ. Чи сылтӑмра тӑнӑ паллӑ вата меньшевик Потресов тӳрех ҫапла ҫырнӑ:

„Буржуалӑ революци пуҫланнӑ тӗле пӗтӗм наципӗ задачӑсене татса пама общественӑпа психологи тӗлӗшӗнчен хӑйхи буржуазийӗх ытларах хатӗрленнӗ иккен. Урӑхла каласан, ҫывӑхри вӑхӑтра, истори кӗске тапхӑрне те пулин, ҫӗршывра аталанса ҫитнӗ капиталисӑм стройӗн йӗркине тӗреклетес вӑхӑта, хуҫа-распорйадител пулма пӳрнӗ класах"[1].

Пулас влаҫӗн характӗрне пахалас ҫӗрте сылтӑмпа сулахай меньшевиксен хушшинче нимӗнле уйрӑмлӑх та пулман. Н. Н. Суханова меньшевиксен хушшинчи „сулахайи" тесе шутланӑ. Вӑл „пораженецпа" пӗрех пулнӑ, вӑрҫӑ ыйтӑвӗнче официаллӑ меньшевиксемпе килӗшмесӗр, вӑл вӑрҫа хирӗҫ пӗчӗк статйасем ҫыркаланӑ. Хӑйне „ҫурмаленинец" тесе каланӑ Суханов вӑл вӑхӑтра ҫапла каласнӑ:

„Патша влаҫӗ вырӑнне йышнакан влаҫ буржуалӑ влаҫ пулмала, Треповпа Распутин вырӑнне Думӑн „прогрессилӗ блокне" йертсе пыраканссем кӑна лармала, ларма пултараҫҫӗ те. Ыйтӑва ҫавӑн пек татса хурас ҫулйӗр тытса пымала. Унсӑрӑн переворот пулас ҫук, революци те пӗтсе ларӗ"[2].

Малала Суханов влаҫа мӗншӗн шӑпах буржуази тӑмаллине каласа панӑ. Демократи сапаланса тӑрат, унӑн политикӑлӑ организацисем ҫук, вӑл влаҫ аппарачӗсӗр государствӑ машинине алла илме пултараймӗ, ҫӗнӗ влаҫ туса хурасси ҫинчен ӗмӗтленме те хӑймаст.

„Мӗн пур государствӑ машини, чиновниксен ҫарӗ, цензӑлӑ земствӑсемпе хуласем, пӗтӗм демократи вӑйӗ пулашнипе ӗҫлесе тӑнӑскерсем, Чхеидзене мар, Мильукова итлеме пултарнӑ. Урӑх аппарат пулман, пулма та пултарайман"[2]—влаҫа буржуази аллине пама кирли ҫинчен Суханов ҫапла ӑнлантарса панӑ. Революцилӗ ларӑ-тӑрӑвра ҫухалса кайнӑ вак буржуа влаҫа илме йе „хӑйӗх ҫитнӗ" хуҫасӑр урӑх кама та пулин влаҫа лартма шутламан та. Революци хумӗ ҫинӗ ӑнсӑртран ҫӗклентерсе панӑ совет лидерӗсене пӗр йапала ҫеҫ пӑшӑрхантарнӑ:

„Ыйту... ҫакӑнта пулат: ҫавӑн пек условисенче цензӑлӑ Российӑ влаҫа илес тейӗ-ши. Задачӑ ӗнтӗ, апла тӑк, ӑна влаҫа интерессинче пулат"[3].

Самодержави хӳтлӗхӗсӗр тӑрса йулнӑ буржуази влаҫ йӑвӑрлӑхне хӑй ҫине илме хӑрарӗ. Шульгин ҫавӑн ҫинчен никамран та уҫҫӑнрах каласа панӑ.

„Епӗр влаҫ ҫунатти айӗнче влаҫа мухтама йе йатлама ҫуралса ҫитӗннӗ... Епӗр чи нумайран та депутат креслисем ҫинчен министр тенкелӗсем ҫине пӗр сиййенсӗр куҫса ларма пултарнӑ... **Император хуралӗ пире сыхласа тӑнӑ условисенче...** Анчах влаҫ персе анма пултарас умӗнче, ҫав тӗпсӗр ҫыран умӗнче пирӗн пуҫ ҫаврӑнннӑ тата чӗре тапма чарӑннӑ[1])

Революци сарӑлса пынӑ ҫемӗн хул-ҫурӑма уҫса пынӑ совет руководителӗсем кутӑнланса тӑнӑ „хуҫа-распорйадителе" вӑйпа влаҫ пама хӑтланнӑ.

Советӑн ӗҫтӑвакан комитечӗ ҫапла йышӑннӑ: Вӑхӑтлӑх комитета хӑй шутланӑ пек правителствӑ членӗсен спискине тума ирӗк парас, правителствӑ составне кӗрес мар, анчах ӑна ҫак условисемпе влаҫ парас: 1) мӗн пур политикӑлӑ тата тӗнлӗ ӗҫсен йенӗпе йӑлтах амнисти памала; 2), сӑмах, сойуз, пуху тата стачкӑ ирӗклӗхӗ памала; 3) сослови, наци тата тӗн тӗлӗшӗнчен картласа тӑнисене пурне те пӑрахӑҫ тумала; 4) полици вырӑнне милици лартмала; 5) вырӑнти управлени органӗсене демократилӗ суйламала; 6) Учредителлӗ собрани пухиччен правителствӑ ҫӗршыва тытса пымали формӑна малтанах татса хуракан нимӗнле ӗҫ те тумала мар; 7) революцилӗ полксене стройран кӑлармала мар тата хӗҫпӑшалсӑрлантармала мар; 8) салтаксене граждӑн прависем памала. Совет требованийӗсем хушшинче ҫивӗч кӗрешӳ пымалӑх пӗр пысӑк ыйту та пулман: ҫӗр ҫинче те, мир ҫинчен те, сакӑр сехетлӗ ӗҫкунӗ ҫинчен те ыйту лартман. Советӑн вак буржуалла меньшевик-есерла лидерӗсем, буржуазине хӑратса пӑрахас мар тесе, ҫав тӗп ыйтӑвӗсем патӗнчен йурийех шарламасӑр иртсе кайнӑ.

Государствӑ думин Вӑхӑтлӑх комитечӗ совет делегацийӗне кӗтсе шутсӑр хытӑ вӗчӗлтетнӗ. Пур ҫӗртен те революци сарӑлса пыни ҫинчен калакан сведенисем килсе тӑнӑ. Полксенчен телефон тӑрӑх салтаксем офицерсем ҫине пӑхасси йапӑхланса пыни ҫинчен пӗлтернӗ. Дворецӑн сылтӑм йенне совет уйӑрса панӑ меньшевик-есерла делегаци ҫитсенех, Родзйанко, Мильуков пӗрне-пӗри пӳлсе хулари анархи ҫинчен каласа пама тытӑннӑ, урамсенче йӗркесӗрлӗхсем ҫинчен тӗрлӗрен сас-хура илтнине пӗлтернӗ. Буржуази лидерӗсем, ҫитес торгисенче хак ыйтас пек, йуптарнӑ. Анчах тӗлӗнтермӗш йенне вӗсене никам та хирӗҫмен. Советӑн вак буржуалла представителӗсем кӑмӑлласа итленӗ. Таврическтий дворецӑн сулахай йенчен килнисем революцирен сылтӑмрин хуҫисенчен кайа мар хӑраса ӳкнине Мильуков ӑнланса илнӗ. Мильуков хӑвӑрт ӑпланса ӗҫтӑвакан комитетӑн условийӗсене тимлӗн алла илнӗ. Рабочисемпе салтак депутачӗсен совечӗн условийӗсене пӗтӗмпе йышӑнма пулат, вӗсем тата совет государствӑ думин комитечӗпе килӗшӳ тӑвас никӗс пулма пултараҫҫӗ, тенӗ Мильуков. Анчах ҫавӑнтах вӑл, кунта татӑклӑн хирӗҫ тӑмали пунктсем пур, тесе хушса хунӑ. Чи малтан ҫӗршыва тытса пымали формӑна малтанах татса хуракан мар нимӗнле ӗҫ те тумала текен пункт. Ӑпланса ҫитнӗ лидер-буржуа делегацине монархи йышӑнма: Николай вырӑнне престола унӑн ывӑлне лартма, Михаила регент тума ӳкӗтле пуҫланӑ. Ку вӑл буржуазин революциччен тахҫан малтан палӑртса хунӑ кивӗ программийех пулнӑ. „Пӗри—чирлӗ ача, тепри—пачах айван ҫын"[1]), тесе ӳкӗтленӗ Мильуков. Родзйанкопа комитетӑн ытти членӗсем ун майлӑ пулнӑ. Мильуков килӗшӳ условисене пурне те тепӗр хут вуласа

---

[1] Деникин А. И. Очерки русской смуты. Том 1, выпуск 1, Париж, 1921 г., стр. 66.

[1] Потресов А. Роковые противоречия русской революции. „Дело" 1917 г., №5—6, стр. 119.

[1] Суханов Н. Записки о революции. Кӗн I, Петроград, Гржебин, 1919 ҫ., стр. 17.
[2] Ҫавӑнтах, стр. 18.
[3] Суханов Н. Записки о революции. -мӗш кӗн., Берлин, Гржебин, 1922 ҫ., стр. 231.

[1] Шульгин В. Дни. „Руская мысель", Прага, 1922 ҫ., VI—VII-мӗш, кӗн., стр. 134

[1] Суханов Н. Записки о революции. 1-мӗш кӗн., Берлин, Гржебин, 1922 ҫ., стр. 279.

(Йулашки 4-мӗш страницӑра).

Китайри вăрçă

ХАҤКОУ, 19—II. (ТАСС). Ҭаҥцзиҥ—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинчи секторта Китай çарĕсем хăйсен ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Китай çарĕсем контрнаступлени тунипе Хуайхе йуханшывĕн çурçĕр çыранĕ патĕнчи пĕтĕм район, Хуаййуаҥ районĕçĕр пуçне (Бенпуран 15 километр хĕвеланăçнеле); Йапони çарĕсенчен тасалнă. Йапонин Хуайхе йуханшыв урлă тепĕр йенне каçнă 9 пин салтакран виç пайĕнчен пĕр пайĕ йалтах çапăçура пĕтнĕ. Йапони çарĕсен йулашки чаçĕсем кайала, çав шывăн кăнтăр çыранĕ хĕрнеле чакнă. Февралĕн 17-мĕшĕнче Китай çарĕсем Çаобенпу йатлă йала йапонецсенчен тĕппипех тасатнă. Йапонецсем йĕркерен тухса кайса Хуайхе шывĕ урлă кайала чакнă чухне Китай авиацийĕ йапонецсем тунă понтоннăй кĕпере çĕмĕрнĕ тата Йапони салтакĕсене çĕр çын ытла пĕтернĕ.

ШАНХАЙ, 19—II. (ТАСС). Йулашки кунсенче çапăçусем Ухy—Хаҥчжоу патĕнчи фронт линийĕ çинче активлăн пулса пыраççĕ. Февралĕн 17-мĕшĕнче Китай çарĕсем Нанкинпа Хаҥчжоу хушшинчи шоссе çулĕ çине темиçе хутчен пырса тапăннă. Китай самоҷочĕсен виçĕ отрйачĕ Укан йатлă хула çине бомбăсем пăрахнă. Укан хули йапонецсен аллинче. Пурĕ вĕсем 16 бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Йапони салтакĕсем вилнисемпе аманнисем 80 çын шутланаççĕ.

„Веҥвейбао" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче Китай çарĕсем Фуйан çине (Хаҥчжоуран кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) талкăшĕпе наступлени тунă.

ХАҤКОУ, 19—II. (ТАСС). Ҭаҥцзиҥ—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче Цзинин хули таврала çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

Бейпин—Хаҥкоу чукунçул патĕнчи фронтра февралĕн 18-мĕшĕнче вăйлă çапăçусем пĕр кун кунĕпех Сиҥсан хули патĕнче (Хенаҥ провинцин çурçĕр пайĕ) пынă.

Хебей провинцинчи 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕн чаçĕсем ĕçсене ăнăçлăн сарса пыраççĕ. Вĕсем провинцин вăтам пайĕнче Ванлу, Динчжоу, Синла, Маҥчен, Синтан, Уцзи хулисене тата ытти пунктсене пĕрин хыççăн теприне йышăнса пынă. Çапла тунипе Йапонин фронтпа тыл хушшинчи çыхану татăлнă. 8-мĕш çар чаçĕсем Баодин патĕнче çапăçусене халĕ те туса пыраççĕ. Февралĕн 16-мĕшĕнче Китай çарĕсем Веҥшуйа (Таййуаҥрен 53 километр кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) çĕнĕрен илнĕ.

Испанири фронтсенче

ХĔВЕЛТУХĂÇРИ (АРАГОҤИРИ) ФРОНТ.

Испани оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 17-мĕшĕнче пăлхавçăсем Вивел дел Риоран кăнтăрла (Монтаљбан секторĕнче) кун умĕн республика çарĕсем йышăннă позицисем çине хыттăн атакă тума пуçланă. Республиканецсем малтан çав позицисене пăрахса хăварнă, анчах та кайран вăйлă контратакă туса пăлхавçăсенчен çав позицисене сийĕнчех кайала туртса илнĕ. Пăлхавçăсен çапăçусем пулнă çĕрте çĕр çын ытла вилнĕ. Республиканецсем, икĕ высотана йышăнса, хăйсен малти линийĕсене лайăхлатнă.

Февралĕн 17-мĕшĕнче фашиссен авиацийĕ Теруел çине тата Мансуетора республиканецсен позицисем çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех фашиссен авиацийĕ Тортахода тата Корбахан йалĕсем çине те (Теруелрен çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) бомбăсем пăрахнă. Республикă артиллерийĕ фашиссен пĕр самоҷотне персе антарнă.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Теруелрен çурçĕреле çапăçусем фронтăн пур линийĕ тăрăх та, Сарагоссă патне çитеччченех, сивĕчленнĕ. Сарагоссă хулине хупăрласа тăракан сăрт-ту патĕнчи позицисенче çапăçу пулса иртнĕ.

КĂНТĂРТИ ФРОНТ.

Пăлхавçăсем хыттăн контратакă тунипе,—вĕсене артиллери вăйлăн пулăшнă,—февралĕн 17-мĕшĕнче республикă çарĕсем Љейрен секторĕнче (Бадахос провинцинче) хăйсем малтан йышăннă позицисене пăрахса хăварса, хăйсен линисем çине куçнă.

Февралĕн 15-мĕшĕнче Хаен провинцинче пăлхавçăсем стратеги тĕлĕшпе пысăк выран йышăнса тăракан позицисене туртса илме хăтланнă. Вĕсем çав позицисене йулашки кунсенче Сантйаго де Калатрова патĕнче (Кордоваран хĕвелтухăçнеле) сухатнă пулнă. Вĕсем, артиллери пулăшнипе, кунта темиçе хутчен те атакăсем тунă. Анчах республикă çарĕсем вĕсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă.

ЦЕНТРТИ ФРОНТ.

Еспаҥ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, республиканецсем февралĕн 17-мĕшĕнче Карабанчел секторĕнче икĕ минă сиктерсе йанă. Вĕсем ним пемесĕрех пăлхавçăсенчен тасалнă виçĕ сурта йышăннă. Çакăн хыççăн пăлхавçăсем кĕтмен çĕртен атакă туса çав сухатнă территорийе тепĕр хут кайала туртса илме хăтланнă. Анчах республикă çарĕсем вĕсене пулеметсенчен хыттăн пеннипе кĕтсе илнĕ. Пăлхавçăсем васкавлăн кайала чакнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

◆◆ 1937 çулта 134 колхозра електростанцисем тунă. Вĕсен пултарулăхĕ 6.570 киловатт. Електростанцисен строителствине колхозсем 21 мĕлйун тенкĕ расхутланă. Колхозниксен çурчĕсенче, урамсенче 152.500 електричествă лампи[illegible]сем çутăлаççĕ.

◆◆ Çураки вăхăтĕнче Курск облăçĕнчи автомашинăсем çине майлаштарса лартнă саслă кинопередвижкăсем пурĕ 20 ĕçлемеле. Вĕсем колхозсенче „Чапаев", „Ленин в Октябре", „Депутат Балтики", „На Дальнем Востоке" тата ытти саслă кинофиљмсем кăтартаççĕ.

◆◆ Февралĕн 18-мĕшĕнче Куйбышев хулинче Иккĕмĕш пилĕк çуллăх займĕн 6-мĕш тиражĕ пĕтнĕ. 173.920 пин тенкĕлĕх 1.060 пин выљав тухнă.

(ТАСС).

* ✪ *

ПЕТЕРНЕ. Кăташ йалсоветĕнчи „Пионер" колхозăн кăçалччен тĕрлĕ йапаласем тумалли мастерской пулман. Хаљ пысăк, таса та çутă мастерской турĕç. Унта çуна, урапа тата колхозра ĕçлемелли ытти хатĕрсемпе йапаласем тăваççĕ.

Михаил Моисейев.

Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăх

Шăнкăртам районĕ малта пырать

Йĕпреç. Шăнкăртам районĕ вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăха хутшăнса, хăй çине çак уйăхлăхра хĕллехи сезонри плана (турттарассипе тата касса хатĕрлессипе) тултарма пулчĕ.

Обйазателствăна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе парти райкомĕпе райĕçтăвком колхозсене конкретлă пулăшу параççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче куљтмассăлă ĕçе туса пыма йатарласа уйăрнă агитаторсем (райкомпа райĕçтăвком работникĕсем) ĕçлеççĕ.

„Маяк" колхозран вăрманта 44 çын çуран, 32 çын лашапа, 1-мĕш Шăнкăртам йалсоветĕнчен (йалсовет председателĕ Вахитов) 20 çын çуран, 35 çын лашапа ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах хăйсен ĕç планĕсене 100 процентран ирттерсе тултараççĕ. Пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозниксем сезонри плана стахановла уйăхлăх пĕтеччченех тултарма пулаççĕ.

Ĕç вăйĕ çителĕксĕр

КАНАШ. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе иртекен стахановла уйăхлăхра районăн 30 пин кубла метр вăрман касса 41 пин кубла метр турттармала. Çак пысăк ĕçе пурнăçлассишĕн районри чылай колхозсем çине тăрса тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Сталин йачĕпе тăракан колхоз стахановла уйăхлăхăн малтанхи кунĕнчех 1938 çулхи вăрман хатĕрлев планне тултарчĕ. Вăрман ĕçĕнчи стахановецсем: Зайцев, Йермаков, Кузьмин т. ыт. те халĕ те вăрмантах ĕçлеççĕ. Вĕсем: „еĉĕр уйăхлăх иртеччченех вăрмана ĕçлетпĕр". теççĕ.

Çĕнĕ Ахпуртри „Хĕрлĕ Путиловец" колхоз (председателĕ Бељайев) хăйĕн планне февралĕн 15-мĕшне 65 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах Хĕрлĕ çăлтăр", „Самољот", „Канаш" тата Максим Горький йачĕпе тăракан колхозсем стахановла уйăхлăха йачĕшĕн кăна хутшăннă. Вăл колхозсенчен кашни кун 15—20 çынран кайа мар ĕçлемеле пулсан, 3—4 шер çын çеç ĕçлеççĕ.

Сĕккассинчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозăн договор тăрăх кăçал 3.400 кубла метр турттармала, 200 кубла метр касса хатĕрлемеле. Февралĕн 15-мĕшне вăл 200 кубла метр касса, 180 кубла метр çеç туртарнă,

В. Васильев.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Хăвăртлăхсене вăйлатмала

Ишлей районĕн иртнĕ çура Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче 110 пин кубла метр çĕр ĕçĕ тумала пулнă. Районти колхозниксем строителствăра тăрăшса ĕçленипе 147 пин кубла метр çĕр ĕçĕ туса плана 133 процент пурнăçларĕç. Кунсăр пуçне тата хĕл вăхăтĕнче 5 пин кубла метр çĕр ĕçне турĕç.

Чукунçул строителствинче уйрăмăнах Тарăн Çырма, Анаткас Марка, Тарăн йалсоветĕсем лайăх ĕçленине палăртмала. Вăл йалсоветсем строителствăна ĕç вăйĕ ытларах парассипе те, ĕçе тĕрĕс организацилессипе те ытти йалсоветсене пример кăтартаççĕ. Акă Тарăн Çырмари „Комбайн" колхозри Кузнецов колхозник пĕр таталмасăр ĕçлесе нормăна куллен 130—140 процент тултарса пынă. Çавăнпа ăна Ишлей райĕçтăвком президиумĕ укçа парса премилерĕ.

Çавăн пекех райĕçтăвком президиумĕ уйрăм стахановецсемпе бригадăсене премилеме Тарăн йалсоветĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" колхоза 200 тенкĕ, Анаткас Марка йалсоветне 150 тенкĕ, „Комбайн" колхоза 200 тенкĕ пачĕ. „Тĕрĕс çул", „Комбайн", „Красноармеец", „Правда" тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсем йулашки вăхăтра хастарлăн ĕçлесе пычĕç. „Тĕрĕс çул" колхозри колхозниксем йенвар уйăх вĕçĕнче 7 кун ĕçлесе 100 кубла метр тăпра чавса кăларĕç.

Анчах йулашки вăхăтра строителствăна ĕç вăйĕ сахал тухни курăнать. Акă, февралĕн 2-мĕшĕнче районĕпе 231 çын çуран 77 çын лашапа ĕçленĕ пулсан, февралĕн 4-мĕшĕнче çуран 167 çын, лашапа 54 çын ĕçленĕ. 14-мĕшĕнче строителствăра пĕр çын та пулман, Февралĕн 15-мĕшĕнче те строителствăра Тарăн çырма йалсоветĕнчи „Комбайнпа" „Чăваш Коммунĕ" колхозсем çеç ĕçленĕ. „Партин 17-мĕш сйесĕ", Потемкин йачĕпе тăракан колхозсем чукунçул строителствинче пачах ĕçлемеççĕ.

Чукунçул хывакансем Çавал шывĕ патнеле çывхараççĕ, инçех те мар. Районăн çуллахи хăвăртлăхсене чакармала мар.

Г. Семенов.

КĔСКЕН

ЕЛĔК. Чăвашсен 3-мĕш колхоз театрĕ хаљхи вăхăтра Елĕк районĕнчи колхозсенче ĕçлет. Вăл Осиповăн „Айдар" пйесине лартать. Хитекушкĕнчи колхозра „Айдар" пйесăна 500 колхозник курчĕç.

И. Прокопйев.

Февралĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарти стройтехникумра кооптехникумри шашиссен шашкă матчĕ пулса иртрĕ. Матч 6,5 : 3,5 шутпа стройтехникум çĕнтернипе пĕтрĕ.

И. Йегоров.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарас умĕн

Смагин пограничник

Çĕрле... Çилтăман кĕрлет. Тапхăр-талхăр çил хăваласа килекен пысăк йур пĕрчисем вăрманта пытанса ларнă пограничниксĕн питкуçĕсене пĕçертеççĕ. Вăрман шавлать.

Чикĕ урлă каçса килекеншĕн çĕрлехи вăхăт—аван вăхăт, пуринчен ытла çакăн пек çанталăкра, мĕншĕн тесен йĕрсем йурпа пытанса пыраççĕ, çил шăхăрни ытти тĕрлĕ шавсене пăчлантарать. Нарйадра кун çинчен кашнийех пĕлет. Пурин куçĕсем те чикĕ хĕрнеле пăхаççĕ.

Ирхине йурлă çилтăман кăштах чаранма пуçланă. Заставăна пымалли çул çинче совет часовойĕсен ханăхнă куçĕ йур çинче çĕнĕ йĕр пуррине асăрханă. Чикĕ урлă каçса кĕнĕ. Çакна тума хăйнă тăшмана хăваласа çитсе тытмалах.

Икĕ пограничник чикĕ урлă каçса кĕнĕ йĕрсем хыççăн пĕр кун кунĕпех çӳренĕ. Йур пĕрчисем пит-куçсене хупланă, çынсем йур кĕрчĕсем çине путнă.

Хĕрĕх километр йăвăр çул хыçала йулнă, анчах та йĕр вĕçне çапах та тухайман. Пĕр йал патĕнче вăл йĕр сасартăк çухалнă. Пулăшу пама хресченсем тухнă та, пограничниксене чикĕ урлă каçса кĕнĕ йĕрсем ăçтала кайнине кăтартса панă.

Икĕ пограничник та самайах ывăннă. Вĕсем хашка-хашка чупнă вăра вăйĕсем пĕтсе çитсен чарăннă. Чикĕ урлă каçса кĕнисем тарса пынă. Кăна нийепле те кун пек хăварма йурамасть. Пограничник Смагин йулташ пĕччченех хыçран хăваласа пынă.

Шљом Смагин пуçне пĕçертнĕ, кĕрек пиншак вунă пăглă йапала пек туйăннă. Красноармеецсен йăвăр атти кашни утăмрах йăвăрланса пынă. Унăн вăйсем пĕтсе çитнĕ. Кĕрĕк пиншака хывса пăрахмала пулнă. Пĕр сехет иртсен, йурлă тăман йăлтах чарăнсан, Смагин хăй умĕнче, икĕ километр хушши малта тусем çине хăвăрттăн кайакан çынсен ушкăнне курнă.

Аттисене хăвăрт хывса урисене портанкăсемпе чĕркенĕ те, вăл чикĕ урлă каçса кĕнисем хыççăн хăваласа çитсе—стой!—тесе хыттăн кăшкăрнă. Хирĕç пăшал пенисем илтĕннĕ. Смагин икĕ чул хушшине пытанса, чикĕ урла каçса кĕнĕ хĕçпăшалланнă—пилĕк çынпа ним хăрамасăр кĕрешӳве тухнă.

Смагин снайперăн пуљљисем вĕсенчен виççĕшне çĕр çине ӳкернĕ. Пĕрне кайса ӳкмелех вĕлернĕ. Ыттисене, ним тума аптраса çитнисене, Смагин—ложись!—тесе командă панă.

Пограничник хушнине пурнăçа кĕртнĕ. Пулăшма пынă йулташсем чикĕ урла каçса кĕнисене заставăна илсе пыма пулăшнă

Шиксĕр патриота, хăй халăхĕн шăнчăклă ывăлне Смагин пограничнике хăйне шеллемесĕр вĕçĕмсĕр хăйулăх кăтартнăшăн хаклă парнесемпе парнеленĕ.

Кантăр чикки, февралĕн 15-мĕш.

Паттăр Хĕрлĕ Çар çинчен ӳкернĕ фиљмсем

Февралĕн 23 мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар флочĕ 20 çул тултарнă кун, республикăри кинотеатрсемпе клубсенче оборонăлă кинокартинăсем кăтартаççĕ.

Шупашкарти саслă кинотеатрта „Балтийцы", строителсен клубĕнче „Юность", пионерсен çуртĕнче „Каро", хресчен çуртĕнче „На Дальнем Востоке", йалхуçалăх институтĕнче „Две встречи" йатлă саслă фиљмсем кăтартаççĕ.

Район центăрĕсенчи фабрикăсемпе заводсенчи, тата колхозсенчи кинотеатрсемпе клубсенче „Любовь и ненависть, „Мы из Кронштата", „Новеллы о героях-летчиках", „Сем барьеров", „Белеет парус одинокий", „Депутат Балтики", „Тринадцать", „Каро", „Подруги", „Ленин в Октябре", „Речь товарища Сталина на предвыборном собрании избирателей Сталинского округа г. Москвы", „Неустрашимые", „За Советскую Родину", „Четвертый эскадрон", „Родина зовет", „Колыбельная", „Чапаев" „Первый взвод" тата „Последняя ночь" йатлă саслă кинокартинăсем пулаççĕ.

П. Тороней.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă кун февралĕн 23-мĕшĕнче Шупашкар хулинче демонстрацине колоннăсен пухăнмали йĕрке

1-мĕш колоннă. Вăтам шкулсенче вĕренекенсем: Горький, Киров, Крупскайа, Калинин йачĕпе тăракан шкулсенче тата Çĕнĕ шкулта вĕренекенсен аслă групписем. Çĕнĕ шкул патĕнче пухăнаççĕ.

Ответлă руководител: Военрук Максимов йулташ.

2-мĕш колоннă. Пединститут, кооптехникум, Йалхуçалăх институчĕ тата рабфак (Осоавиахим йĕркеленичен йулнисем).

Ответлă руководителсем: Семенов тата Соколов йулташсем. Йалхуçалăх институчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

3-мĕш колоннă. Стройтрест, Пичет çурчĕ тата 1-мĕш № типографи, Коммуналă Хуçалăх Халăх Комиссариачĕ. Ответлă руководител Ворначев йулташ (Стройтрест). Пичет çурчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

4-мĕш колоннă. Тир-сăран завочĕ, Чăвашлес, Макарон фабрикĕ, Мелтрест, Дет. комисси, Осоавиахим Тĕп Совечĕ, сăра склачĕ.

Ответлă руководителсем: Данилов йулташ (Макарон фабрикĕ тата Липов йулташ (Осоавиахим Тĕп советĕнчен). Дет. комисси çурчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

5-мĕш колоннă. Кирпĕч завочĕ, Водосвет, спирт завочĕ.

Ответлă руководител: Савелйев йулташ (Макарон фабрикĕ). Спирт завочĕ патĕнче пухăнаççĕ.

6-мĕш колоннă. Промсойуз хăйĕн мĕн пур производствăлă ертелсемпе пĕрле тата промкассă.

Ответлă руководител: Гречканев йулташ (Чăвашпромсойуз). Промсойуз патĕнче пухăнаççĕ.

7-мĕш колоннă. Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, ПССЛКС облăç комитечĕ, ПСК(б)П хула комитечĕ, ПССЛКС хула комитечĕ, Пропагандиссен шкулĕ, Парти вĕренӳ çурчĕ.

Ответлă руководител: Соколов йулташ (Ĕçтăвакан Тĕп Комитет). ПСК(б)П хула комитечĕн çурчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

8-мĕш колоннă. Чăваштторг, Чăвашсойуз, Чебторг хăйсен мĕн пур производствăлă предприйатийĕсемпе, суту-илӳ тăвакан магазинсемпе тата ларйоксемпе пĕрле.

Ответлă руководител: Братчиков йулташ (Чебторг). Чăвашсойуз патĕнче пухăнаççĕ.

9-мĕш колоннă. Хула совечĕ, Хула коммуналлă хуçалăхĕ хăйĕн предприйатисемпе пĕрле, вăрманпромсойуз, Вăрманпромхоз, „Красный Мебельщик" ертел, Чăптапромсойуз, нефт базни, „Крестьянин" завод, гортоп, тырпул хатĕрлев кантурĕпе хатĕрлев пункчĕ.

Ответлă руководител: Барский йулташ (Вăрманпромсойуз). Хула совечĕ патĕнче пухăнаççĕ.

10-мĕш колоннă. Бољницă, Поликлиникă, Соцгигиенă институчĕ. Сывлăх халăх комиссариачĕ, аптекă, Аптекă управленийĕ, Акушер шкулĕ.

Ответлă руководител: Биктимиров йулташ (Акушер шкулĕ). Поликлиникă патĕнче пухăнаççĕ.

11-мĕш колоннă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Йалхуçалăх банкĕ, Финанс Халăх Комиссариачĕ, Перекет кассисем, Госбанк, Спецбанк, Госстрах, Халăх Комиссарĕсен совечĕ çумĕнчи Хатĕрлев Комитечĕ, Сутăç Халăх Комиссариачĕ, Инвалидсен кооперативла сойузĕ, Йустици Халăх Комиссариачĕ, Чукунçул строителстви управленийĕ, Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ.

Ответлă руководител: Степанов йулташ (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ). Йустици Халăх Комиссариачĕ патĕнче пухăнаççĕ.

12-мĕш колоннă: Çыхăну çурчĕ, Сутуилӳ Халăх Комиссариачĕ, Снабсбыт, Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ, Утилсырйо, Заготкож, Ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ.

Ответлă руководителсем: Стариков йулташ (Снабсбыт сойузĕ) тата Золотов йулташ (почтă). Çыхăну çурчĕ умĕнче пухăнаççĕ.

13-мĕш колоннă. Халăх-Хуçалăх учочĕн Управленийĕпе Государствă план комиссийĕ, „Спотара" сойузĕ, Пахча-симĕç сойузĕ, Выљăх хатĕрлев кантурĕ, Шывçул транспорчĕ, Хресчен çурчĕ, Архив бюровĕ, Кинотеатр, Искусствă работникĕсем, Профсойузсен çурчĕ.

Ответлă руководителсем: Матросовпа Назаров йулташсем (Госплан), Хресчен çурчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

14-мĕш колоннă. Автогужтрест, Ошосдор тата Çулйĕрпе усă курассине йĕркелекен тытăм, Автоинспекци.

Ответлă руководител Запољский йулташ (Автогужтрест). Автоинспекци çурчĕ патĕнче пухăнаççĕ.

15-мĕш колоннă. Садвинтрест совхозĕ № 16.

Ответлă руководител: Назаров йулташ.

16-мĕш колоннă. Чăвашсен Коммунисла Йалхуçалăх Аслă шкулĕ, Стройтехникум. Ответлă руководителсем: Военруксем Ижейевпа Соловйов йулташсем.

17-мĕш колоннă. Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ тата Милици Управленийĕ. Милици управлени патĕнче пухăнаççĕ.

Асăрхаттарни: кунта кăтартман ытти учрежденисемпе организацисем хăйсен коллективĕсемпе пĕрле хăйсенчен çывăхра пухăнакан колонăсем çумне тăраççĕ.

Колоннăсен плошчĕд коменданчĕ Гордейев йулташ йĕркеленĕ сирĕп план тăрăх тăрса тухмала.

Осоавиахимăн сводная колонни, Ворошилов пек тĕл перекенсем тата ПВХО значкисĕсем тата допризывниксем февралĕн 23-мĕшĕнче 15 сехетре Осоавиахим Тĕп Совечĕн çурчĕ умĕнче пухăнаççĕ.

Митинг февралĕн 23-мĕшĕнче 4 сехетре пуçланать. Колоннăсен руководителĕсем февралĕн 22-мĕшĕнче 18 сехетра Осоавиахимăн хула советне канашлуна пымала.

Шупашкар хула комиççийĕ.

ФЕВРАЉТИ БУРЖУАЛĂ-ДЕМОКРАТИЛĔ РЕВОЉУЦИ

(Йулашки)

тухнă, пĕр сăмахсăр Учредителле собрани пухма килĕшнĕ, анчах çĕршыва тытса пырас формă пункти çинчех такăннă.

Тавлашнă хыççăн çакăн пек компромисла формулировкă йышăннă:

„Пурне те тивĕç, пĕр тан, тӳрех тата вăрттăн сасăласа суйлавă Учредителле собранийе пухма халех хатĕрлемеле. Вăл çĕршыва тытса пымалли формăна тата çĕршывăн конституцийĕне туса çирĕплетмеле"[1].

Çавăн пек йышăннă пункт Миљукова алран çыхса тăман, условине хăйне кирлĕ пек ăнланма пултарнă.

Салтак прависем çинчен калакан йулашки требованийе те Миљуков хăйĕн пулас политикине çăмăлатакан тӳрлетӳ кĕртнĕ:

„Çарпа техникă условийĕсем ирĕк панă таран"[2].

Совет çĕнĕвĕсене ансат пăхса тухса, Миљуков хăй йенчен пĕр условин кăларса тăратнă: советăн ĕçтăвакан комитечĕ çак правителствăна рабочи депутачĕсен совечĕпе килĕшсе туса хунă; çавăнпа вăл массăн шанăçне тивĕçлĕ текен деклараци пичетлесе кăлармала: декларацире офицерсене ытлеме салтаксене чĕнсе калани пулмала.

Лару пĕтнĕ. Вăхăтлăх комитет правителствă спискине тума тытăннă, совет представителĕсем декларацине ларнă. Мартăн 2-мĕшĕнче тул çутăлас чух каллех пĕрле пухăннă. Совет представителĕсен декларацийĕ Миљуков кăмăлне кайман, вăл çавăнтах ăна тӳрлетме ларнă. Совет представителĕсем Вăхăтлăх правителствă çинчен пĕлтермелли мĕн пур пунктсене çырса хатĕрленĕ, буржуази лидерĕ ĕçтăвакан комитетăн декларацийĕне çырса хунă. Çав картинăра буржуалă правителствăна советăн вакбуржуалă лидерĕсем хушшинчи пулас хутшăнăвсен пĕтĕм тупсăмĕ курăнса тăнă.

Çав ирех правителствă составĕ çинчен пĕлтернĕ: председателпе шалти ĕçсен министрĕ—кнјаç Г. Йе. Љвов, йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ—П. Н. Миљуков (кадет), çарпа тинĕс—А. И. Гучков (октябрист), çулйĕр—Н. В. Некрасов (прогрессист), финанссен—М. И. Терещенко, сутăç—А. А. Мануйлов (кадет), Синод обер-прокурорĕ—В. Н. Љвов, çĕрĕç министрĕ—А. И. Шингарйов (кадет), йустици—А. Ф. Керенский (трудовик), государствă контролерĕ—И. В. Годнев. Ултă çынна, урăхла каласан, составăн ытларахăшне 1915 çулти кĕркуннех палăртса хунă „шанăç министерствин" спискинчен илнĕ.

Хĕçпăшаллă вăйпа массăсен пулăшăвĕ советсен йенче пулнă, влаç Вăхăтлăх правителствă аллине лекнĕ. Историре сайра тĕл пулакан икплаçлăх пулса тăнă. Ленин çавăн пирки çапла çырнă:

„Пирĕн революцийĕн калама çук паха хăй йевĕрлĕхĕ вăл **икплаçлăх** туса хуни çеч пулать... Мĕнле пулатха икплаçлăх? Акă мĕнре: Вăхăтлăх правителствăпа, **буржуази** правителствине йунашар халлĕхе вăйсăр, пуçламĕш, анчах çапах та чăннипе çăмах та çук пурнакан тата ӳссе пыракан **тепĕр правителствă:** рабочисемпе салтак депутачĕсен совечĕсем пулса тăчĕç".

Уннах та çитмест-ха, çĕнтернĕ рабочисемпе салтаксем кăларса тăратнă, анчах меншевиксем йертсе пынă советсем хăйсем Вăхăтлăх правителствă влаçне пăхăнса тăрассине ирĕккĕнех йышăннă—салтаксемпе рабочисем çĕнсе илнĕ влаçа ирĕккĕнех буржуази аллине панă.

Мĕншĕн?

Буржуази клас тĕлĕшĕнчен пролетариатпа хресченсенчен организациллĕрех пулнă. Çав организациллĕхе вăрçă уйрăмах вăйлатнă. Вăрçăпа çитес революци пирки самодержавипе пулнă конфликтсенче буржуази чăннипе хăйне ваљљп влаçăн пулас аппаратне хатĕрленĕ.

„Влаç,—тесе çырнă Ленин,—ирĕклĕхшĕн йун йухтарса патша çарĕсене хирĕç, паллах капиталиссем мар, рабочисемпе хресченсем, салтаксемпе матроссем кĕрешнĕ пулин те, çав парти (капиталиссен **Ред**) аллине ăнсăртран лекмен. Капиталиссен класĕн аллинче пуйанлăх, организаци тата пĕлӳ вăйĕ пулнă пирки влаç капиталиссен парти аллине лекнĕ. 1905 çул хыççăнхи вăхăтра, уйрăмăнах тата вăрçă вăхăтĕнче Российари капиталиссемпе вĕсен çумне çыпçăнакан помещиксен класĕ хăйне организацилес ĕçре нимрен ытла ăнăçу турĕ"[1].

Пролетариат влаçа йарса илме буржуазирен сахалрах хатĕр пулнă. Бољшевиксен партийĕпе пролетариатăн политикăлă пиçĕрех пайĕ йе вăрçăра пĕтнĕ, йе емиграцире йе инçет çĕпĕрти ссылкăра пулнă йе пĕтĕм фронтсенче сапаланса тăнă. Ун вырăнне йалтан çĕнĕ массăсем тата партин опытсăртарах членĕсем килсе тăнă. Чăн та, çĕнçынсем рабочисен пысăк пайĕ чухăн хресчен хушшинчен, пĕр пайĕ кăна—кулаксемпе хулари вак буржуази хушшинчен тухнă пулнă. Йулашкисем оборонă промышлĕннăçĕнче ĕçлесе, мобилизацирен çăлăнса йулнă. Анчах кĕсем те пролетариат хушшине хăйсемпе пĕрле вакбуржуалă тĕпшĕшлĕхсемпе политикăлă сукăрлăх кӳрсе килнĕ. Çавă вăл пролетариата вăйлăрах вăйсăрлатнă.

Йулашкинчен çакă та пысăк вырăн йышăнса тăнă: „халăхсен тĕрми" текен патша Российĕнче политикă тĕлĕшĕнчен çывăрнă вуншар мĕлйун çынсем тӳрех политикăлă пурнăçа хутшăннă. Обывателсен, вак буржуйсен, уйччен патша стройĕн тискер пурнăçĕнче пурăннăскерсен, мĕлйуншар массисем хăйсен йышĕпе пролетариата пусарса лартнă. Вакбуржуалă улăпла хум ăнланулă пролетариата çавăрса çапнă тата кăштах ăна идейă тĕлĕшĕнчен те пăснă. Рабочисен чылай пысăк пайне вакбуржуалă килĕшӳ тăвас суйа ĕмĕт çавăрса илнĕ пулнă.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ революцилĕ рабочисемпе хресченсен февраљти çĕнтерĕвĕн çимĕçĕсем буржуази аллине лекнĕ.

Çав сăлтава пулах бољшевиксем барикадăсенче çапăçакансен авангардĕнче пынă хушăра советсене меншевиксемпе есерсем ытларах кĕрсе ларнă. Вакбуржуалă хум малатанхи вăхăтра вакбуржуалă лидерсене ытларах вырăн парса, совет составне те палăртса хунă. Бољшевиксем урамсенче кĕрешнĕ вăхăтра есерсемпе меншевиксем советра çирĕпленнĕ. Петроград совечĕ суйласа лартнă Ĕçтăвакан вăхăтлăх комитет йышăннă тăрăх пысăк заводсем совета пин çын пуçне пĕр представител йанă, пин рабочирен кайарах ĕçлекен предприйатисем те пĕрер депутат суйланă. Представителсене çавăн пек суйласа йамала тунипе Петроград пролетариачĕн 87 проценчĕ ĕçлекен шултăра заводсем советра 124 вырăн — мĕн пурĕ те 13 процент рабочи ĕçлекен вак предприйатисенчен икĕ вырăн çеç ытларах илнĕ.

Çапла вара, индустрилĕ гигантсем, завод—„бољшевиксем", йухăма йертсе пыракансем, ремесла йышши вак предприйатисен ăшне путнă.

Унсăр пуçне совета тĕрлĕрен çар управленисен, çар службисен, магазинсен представителĕсене, темиçе çĕр хресчене—политикă тĕлĕшĕнчен пиçсе çитмен çынсем ытларах пулнă гарнизонран салтаксене суйланă.

Çавсем пур те, пĕрле илсен, Петроград советне йертсе пырассин сăн-сăпатне палăртса хунă.

[1] Милюков П. Н. История второй русской революции. Том I, выпуск I. София, 1921 г., стр. 28.

[2] Çавнтах, стр. 28.

[1] Ленин В. И. О двоевласти. Сочинения, том XXI, стр. 94.

[1] Ленин В. И. Уроки революции. Сочинения, том XXI, стр. 69

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан**ă**
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăваш АССР Государствă страховани тытăмне
ИНЖЕНЕР йе ТЕХНИК-строител кирлĕ.
ĔÇУКÇИ КИЛĔШӲ ТĂРĂХ.
АДРЕС: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 12 (картишĕнчен кĕмеле), телефон 1—90
3—3

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 91 Гор. Чебоксары. Типографии № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 92—94 см. 1—1 п. л.